К С(ЧУВ)
Ы 29
34484-чув

Николай Ыдарай

# Савăк вăхăт



Национальная библиотека ЧР
4-034484



ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

К С(Чув)
Ы-29
34484-чув




**Сăвăсемпе калавсем, юмахсемпе туптарусем**

Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
1993

К 84.09 (=Чув) 6

ББК 84 Чув 7
Ы 15

84 (2РОС=Чув) 6

ПРОВЕРЕНО
2010

**Ыдарай Н. В.**

Ы 15 Савăк вăхăт. Сăвăсемпе калавсем, юмахсемпе туптарусем. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1993.—151 с.

Кĕнекери сăвăсемпе калавсене, юмахсемпе туптарусене ача сачĕсенчи вăтам ушкăнсем (группăсем) валли хатĕрленĕ.

**ББК 84 Чув 7**

Ы $\frac{4803710202-78}{М\ 136\ (03)-93}$ 50—93

ISBN 5-7670-0709-8

34484чув
345

Чувашская Республиканская БИБЛИОТЕКА им. М. Горького

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1993 ç.

# АЧАЛĂХ КУНĔСЕМ



**Апатсăр та ӳсме çук,**
**Вăйăсăр та ӳсме çук,—**
**Алла лексен кĕнеке**
**Вуламасăр тӳсме çук.**

## Аван-çке!

Ман анне чи илемли,
Ман атте чи хисепли.
Атте-анне лайăхран
Вĕçĕм юрлас килет ман.

Ман аппа чи сăпайли,
Ман пичче чи хавасли.
Аппа-пичче лайăхран
Вĕçĕм ташлас килет ман.

Хуп сăпкара йăмăк пур,
Путмар* çинче шăллăм пур.
Вĕсем йăл-йăл кулнăран
Хавасланас килет ман.

## Аннесен кунĕ

Савăнса кĕтсе илетпĕр
Аннесен уяв кунне,
Пирĕнтен илсемĕр тетпĕр
Парнине те саламне.

Вĕсене халь чыс тăватпăр,
Парнелетпĕр чечексем,
Ыр сунса сăмах калатпăр:
— Сывă пулччăр аннесем!

---

* Путмар — сак, йывăç кравать.

## Айван ача

*Юмах*

Айван ача чĕреспе
Ҫуккăш патне ярăнать,
Ҫуккăш патне ҫитеспе
Хыр тĕлĕнче чарăнать.

Чăпар куккук пикенсе:
— Ҫу-ку! — тесе авăтать.
Айван ача тĕлĕнсе:
— Ҫукка! — тесе савăнать.

Ҫуккăш валли кучченеҫ
Чĕресĕнчен кăларать,
Ҫучченеҫне хыр айне
Пăрахать те хăварать.

Айван ача чĕреспе
Пиччĕш патне ярăнать,
Пиччĕш патне ҫитеспе
Шур тĕлĕнче чарăнать.

Шур кайăкĕ пикенсе:
— Пи-чи! — тесе сас парать.
Айван ача тĕлĕнсе:
— Пичче! — тесе савăнать.

Пиччĕш валли кучченеҫ
Чĕресĕнчен кăларать,
Ҫучченеҫне шыв хĕрне
Пăрахать те хăварать.

## Автан

Автан ирех вăранать —
Ачасене вăрататъ,
Ачасене вăрататъ —
Ача садне васкатать.

## Апăрша

Айван ача Апăрша
Ҫайма пулнă Вăрмара.
Ҫитеймен-ҫке Вăрмара,
Пырса тухнă Вăрнара.

Айван ача Апăрша
Ҫайма пулнă Ҫанаша.
Ҫитеймен-ҫке Ҫанаша,
Пырса тухнă Пакăша.

Айван ача Апăрша
Ҫайма пулнă Пакăша.
Ҫитеймен-ҫке Пакăша,
Пырса тухнă Явăша.

Айван ача Апăрша
Ҫитеймен-ҫке Ҫанаша.
Ҫайнă майăн Ҫанаша
Пырса тухнă Ямаша.

Халь ăҫта-ши ҫав ача?

Вăрмар, Вăрнар, Ҫанаш, Пакăш, Явăш, Ямаш — ял-хула ячěсем.

## Анчăк çухални

*Юмах*

Ака пĕтнĕ çĕрелле,
Те кăнтăрла, те çĕрле,
Анчăк çури çуралать—
Çуралсанах çухалать.

Пĕр кун иртет—анчăк çук,
Ик кун иртет—анчăк çук,
Виç кун иртет—курăнмасть,
Тепĕр кун та тупăнмасть.

Пилĕк кунтан тупăнать—
Йытă пулса таврăнать,
Хамлатса вăл пĕлтерет:
— Анчăк мар эп—йытă!—тет.

Хуçи йытта курсанах
Хуравларĕ çапларах:
— Ентĕ хуть те мĕскер пул,
Çĕрле анчах сыхă пул!

Анчăк ĕçĕ вĕресси—
Вĕрсе хурал тăрасси,
Тимлĕ хурал тăрасси—
Хуçа мулне упрасси!

Юмах ăсти мĕн тăвать?—
Юмах пĕтсен шăпланать.

## Ачапа хĕвел

Ирпе ирех тăратăп,
Хĕвел çине пăхатăп:
— Ҫахал мар эп, сар хĕвел,
Ман пирки эс ан хĕрел!

Хĕвел хирĕç йăл пăхать,
Манпа ăшшăн сăмахлать:
— Хĕвел хĕмĕ санра пур —
Çитĕнетĕн пит маттур!

## Икĕ чĕлхе

Вырăсла та калаçар,
Чăвашла та сăмахлар —
Иккĕшĕ те халь вĕсем
Чуна çывăх чĕлхесем.

## Пирĕн ĕç

Пирĕн ĕç те пĕчĕк мар,
Пĕчĕк тесе калас мар:
Пирĕн хăвăрт ӳсмелле —
Пысăкланса çитмелле!



## Майрук

*Юмах*

Анушăн чипер пукане пур.

Ăна Майрук тесе чĕнеççĕ. Майрук — май çук лайăх пукане. Хăй те, ячĕ те лайăх. Кăмăлĕ те лайăх ун! Маттур пукане! Пур енчен те илĕртӳллĕ, пур енчен те пултаруллă — калаçма кăна пĕлеймест. Калаçма пĕлеймест терĕм-и-ха? Калаçма та пĕлет вăл, анчах чĕлхипе мар. Чĕлхепе калаçмасан мĕнпе калаçăн-ха тата? Калăпăр, куçпа калаçма пулать. Майрук шăп кăна куçпа калаçакан пукане. Анушпа пĕрле вăранать те ирхине:

— Ирхи салам, Ануш! — тет вăл тусĕ çине ăшшăн пăхса.

— Сана та ирхи салам! — тет Ануш чипер тусне.

Малалла мĕн тăвать-ха Майрук? Малалла вăл Ануш çăвăннине, Ануш тумланнине, Ануш апат çинине тимлĕн сăнама тытăнать. Ануш

мĕнле те пулин йăнăш е кăлтăк тăвас пулсан Майрук çиййĕнчех асăрхама ĕлкĕрет. Ун пек чухне куçĕпе йĕплесе пăхать те:

— Апла юрамасть!— тесе систерет.

Ануш ăнланать ăна. Питĕ лайăх ăнланать. Айăпа кĕрес-тăвас пулсан салху сасăпа:

— Урăх ун пек тумăп!— тесе хуравлать.

Майрук ăнланать ăна. Пукане пулсан та ăнланать. Çамрăк тусĕн алли ĕç тытсан, ĕçре маттурлăхне кăтартсан Майрук куçĕсем йăл-тăр-р! çуталаççĕ.

— Шутсăр аван! Шутсăр лайăх!— теççĕ вĕсем.

Питĕ килĕштерсе пурăнаççĕ Анушпа Майрук. Вĕсен килĕшӳллĕ пурнăçне пĕр майсăрлăх кăна кăштах пăсать — ирхи уйрăлу. Ара çав, Анушăн ача садне каймалла, Майрукăн пĕччен ларса юлмалла. Пĕр-пĕчченçи тăрса юлмалла. Кичем. Тунсăх. Епле кичем пулсан та, епле тунсăх пулсан та Майрук макăрмасть, Ануш кăмăлне пăсасран хăрать. «Ан кай, Ануш!» тесе калас вырăнне:

— Чипер кай, Ануш!— тесе юлать.

— Чипер юл, Майрук!— тет Ануш та аллипе сулса.

Юлать вара Майрук хурланса. Хыççăн тухса чупас — майĕ çук.

Ялан çапла. Мĕнех, кăштах тунсăх пусни те юрать, ун вырăнне каçхи тĕл пулу хаваслăрах пулать. Çав паха!

## Ака туй

(Ача сачĕсем валли пĕчĕк пьеса)

ВЫЛЯКАНСЕМ

АВТАН — арçын ача. Вăл автан тумĕпе, киккириклĕ калпакпа.

АХВАН — арçын ача.

АРÇЫН АЧАПА ХĔР АЧА.

АСАМÇĂ — авалхи асамçă тумĕпе: хура маска, хура плащ тата шĕвĕр тăрăллă калпак унăн. Тумĕ çинче тĕрлĕрен асамлăх паллисем, аллинче — ăрăмçă патакĕ. Вăлах сцена çинче режиссер ĕçĕсене туса пырать.

ÇĔР-ПИКЕ — ешĕл симĕс тумлă хĕр ача. Тумĕ çинче тĕрлĕ тĕслĕ чечексем, пуçĕнче — тухья, мăйĕнче — мăй çыххи, хул пуççи урлă — тевет, уринче — ĕнчĕ пушмак.

ТŸПЕ ҪАЧЧĂ — сенкер кăвак тумпа. Тумĕ çинче кĕмĕл çăлтăрсемпе планетăсем. Пуçĕнче — сăсар çĕлĕк, уринче — хĕрлĕ атă.

ШУРСУХАЛ — аваллăха чухлакан старик. Вăл юр пек шурă тумпа. Унăн сухалĕ те, çӳçĕ те шап-шурă. Аллинче — туя.

Спектакльре — ака туй курма пынă арçынсемпе хĕрарăмсем, ачасемпе воспитательсем, килте ача пăхакансем. Ачасен ролĕсене ачасемех выляççĕ, мăннисен ролĕсене — воспитательсем.

Хисеплĕ тĕпел. Ун хыçĕнче — илемлĕ кермен. Çав кермен хыçĕнче — сĕм вăрман. Йывăç-курăк çулçă сарнă вăхăт.

ПĔРРЕМĔШ ПАЙĔ

Автан *(кермен хыçĕнчен тухса)*. Ку-ку-ру-кук!.. Ку-ку-ру-кук! Ку-ку-ру-кук!..

Автан мăйне тăсса, çунатне çапса, чĕвен тăрса виçĕ хутчен авăтать.

Ахван *(кермен хыçĕнчен тухса)*. Автан тус, Автан тус, мĕншĕн хытă авăтатăн? Мĕншĕн хытă авăтса ăшă ыйхăран вăрататăн?

Автан. Ара, эсĕ паян мĕнле кунне пĕлместĕн-и? Паян пирĕн мĕнле кунччĕ-ха?

Ахван *(астума тăрăшса)*. А-а-а, астурăм: паян пирĕн Миххей мучи çуралнă кун.

Автан. Çук, паян пирĕн Миххей мучи çуралнă кун мар. Паян пирĕн...

Ахван. А-а-а, астурăм! Паян пирĕн пăри пăтти çимелли кун!

Автан. Çук ĕнтĕ! Пăри пăтти çимелли кун мар. Паян пирĕн...

Ахван. Астурăм тинех! Паян пирĕн ака туй кунĕ! Пĕлместĕп тесе юри кăна каларăм. Курмастăн-им, мĕнлерех тумланнă эпĕ! *(Çаврăнкаласа тумне кăтартать.)*

Автан. Маттур, маттур! Паян пирĕн çуркуннехи хисеплĕ ака туй. Апла пулсан, Ахван тусăм, мĕн тумалла-ха?

Ахван *(хавхаланса)*. Ачасене пухмалла! Хăнасене чĕнмелле! Кайрăмăр! Кайрăмăр! Кайрăмăр! *(Иккĕшĕ икĕ еннелле чупса тухса каяççĕ. Сцена хыçĕнче «Ака туй! Ака туй!» тесе кăшкăрнисем илтĕнеççĕ.)*

Асамçă *(сцена çине хăй тĕллĕн калаçса тухать)*. Ара, мĕн каласшăнччĕ-ха эпĕ? Астуса илтĕм. *(Сăвăласа.)*

Акă вăл, акă вăл,
Ака туйĕ çакă вăл.

Ака туйĕ пынă чух
Аслă хуçа мĕншĕн çук?

Ака туйĕнче аслă хуçа кам-ха вăл? Аслă хуçа — асамçă. Асамçă — эпĕ! Эпĕ пур-и кунта, çук-и? Эпĕ пур, акă вăл — эпĕ *(Хăйне пӳрнипе тĕллесе кăтартать.)* Эпĕ пур, ака туй çук. Ака .туй ирттерекен артистсем те çук. Ака туй куракансем пур-и? Ака туй куракансем пур иккен. Ха, мĕн чухлĕн вĕсем! *(Зал çине пăхса.)* Ака туй куракансемпе ака туй хăнисем! Ака уявĕ çитнĕ ятпа сире пурсăра та хĕрӳллĕн саламлатăп. *(Пуç таять.)* Эй, ака туй ăстисем, ăçта эсир?

Ачасем *(икĕ енчен те сцена çине ашшĕ-амăшĕсемпе пĕрле тухаççĕ)*. Эпир пур. Эпир пурте пухăннă! Сире кăна кĕтетпĕр!

Асамçă. Пит аван, пит аван! Пухăннă пулсан вырнаçса ларăр! *(Ачасемпе вĕсен ашшĕ-амăшĕсем икĕ енне ушкăнланса лараççĕ.)*

Ачасем. Вырнаçрăмăр! Ларса тухрăмăр!

Асамçă. Аван, аван! Питех те аван! Калăр-ха мана, эсир паян мĕнле кунне пĕлетĕр-и?

Ачасем. Пĕлетпĕр! Паян пирĕн — ака туй кунĕ!

Асамçă. Маттур, маттур! Эсир паян мĕнле кун иккенне тĕрĕсех пĕлетĕр. Тата тепĕр ыйту парам-ха: мĕн вăл ака туй?

Ачасем *(икĕ енчен те)*:

— Курман-илтмен!

— Пĕлетпĕр!

— Пĕлместпĕр!

Асамçă. Пĕлни — питĕ лайăх, пĕлменни —

питĕ япăх. Апла пулсан мĕн тумалла? Пĕлекенсем хăйсемех пĕлеççĕ, пĕлменнисене пĕлтерес пулать. Ака туй çинчен кам каласа пама пултарĕ-ха? Кун çинчен вăрăм ĕмĕр пурăнакан ватăсем каласа пама пултараççĕ. Вăрăм ĕмĕр пурăнакансене кам тетпĕр?

Ачасем.— Вĕсене асаннесем тетпĕр!

—Асаттесем тетпĕр!

—Ватă çынсем тетпĕр!

Асамçă. Çапла, вĕсене эпир хисеплесе шур сухаллă ватăсем тетпĕр. Кĕскен — шурсухалсем. Вĕсем авалхине те, пулассине те аванах чухлаççĕ. Вĕсем пурне те пĕлеççĕ.

Арçын ача. Аçтан тупăпăр-ха вĕсене?

Хĕр ача. Пирĕн кунта шурсухалсем çуккă вĕт?

Асамçă. Акă мĕн, ачасем. Ман алăра ăрăмçă патакĕ пур. Çав асамлă патак пулăшнипе эпир Шурсухала кунта чĕнсе килĕпĕр.

Ачасем *(пĕрле)*. Юрать! Юрать! Юрать!

Асамçă *(юмласа)*. Арабах-карабах-тарабах, юмламашкăн пулăшах! Ăс-хал пухнă Шурсухал пирĕн умра пултăрах!

Шурсухал *(пырса тухать)*. Аликкĕм салам, тав сире! Вылятра-кулатра, ĕçетре-çиетре, пире хапăл тăватра, сумлăн кĕтсе илетре? Хапăл тусан — виçĕ утăм малалла пусăпăр, хапăл тумасан — виçĕ утăм каялла чакăпăр. Хапăл тăватăр-и?

Ачасем *(виçĕ хутчен)*. Хапăл тăватпăр!

Шурсухал. Ачасем, эсир кунта ахалех пухăнман пулĕ-ха, мана та ахалех йыхăрман

пулĕ? Мана мĕн çăмăлпа чĕнсе илтĕр-ха?

Ачасем. Ака туй çинчен каласа кăтартма чĕнтĕмĕр!

Шурсухал. Тавах сире сума суса чĕннĕшĕн! *(Пуç таять.)*

Асамçă *(Шурсухала)*. Авалхи йăлапа, паянхи сăлайпа эсир ака туй тĕпелне иртсе ларăр-ха. Ачасем, пулăшăр Шурсухала! *(Арçын ачапа хĕр ача Шурсухала хисеплĕ вырăна лартаççĕ.)*

Шурсухал. Тавах сире, ачасем! Манса та кайрăм ĕнтĕ, мĕн тума чĕннĕччĕ-ха мана?

Асамçă. Хисеплĕ Шурсухал, ака туй тени мĕн вăл? Ачасен çавна пĕлес килет. Çавăн çинчен тĕплĕн каласа кăтартаймастăр-ши çамрăк халăха?

Шурсухал. Ара ĕнтĕ, ачасем ыйтаççĕ пулсан епле каласа кăтартас мар-ха? Ҫаласа кăтартасах пулать. Акă к-хм! тăватăп та пуçлатăп сăмаха. Çăварăрсене хупса хурăр, хăлхăрсене уçса хурăр! Ҫ-хм!.. Ҫ-хм!.. Ҫ-хм!.. *(Сăмахлама пуçлать.)* Авалхи вăхăтсенче, асран тухнă çулсенче, çакă çавра Çĕр çинче тĕрлĕрен хăватсем нумай пулнă. Лайăх хăватсемпе усаллисем те, начар хăватсемпе ыррисем те пулнă вĕсен хушшинче. Усал хăватсене — Усалсем тенĕ, ырă хăватсене — Ырăсем тенĕ. Çапла тĕлĕнтермĕшсем те нумай пулнă. Тĕлĕнтермĕшсенчен пĕри вăл — хура тăпраллă Çĕр. «Мĕнле-ха, — тенĕ авалхи çынсем, — ним çук çĕртех йывăççемпе курăксем шăтса ӳсеççĕ?» Çав асамлă хура тăпраллă Çĕре чăваш-

сем Çĕр-пике тесе пĕлнĕ. Тĕлĕнтермĕшсенчен иккĕмĕшĕ — куçпа виçейми кăвак тӳпе. Аслă тӳпере çăлтăрсемпе çутлăхсем, уйăхпа хĕвел ярăнса çӳренĕ. Ҫаллех ним çук çĕртен хура пĕлĕтсем капланса килнĕ те... аслати авăтнă, çиçĕм çиçнĕ, чашлаттарса çумăр çунă. Кăвак тӳпене чăвашсем Тӳпе-каччă тесе пĕлнĕ. Ун чухне те, хальхи пекех, çут çанталăк улшăнса тăнă: çуркунне хыççăн — çулла, çулла хыççăн — кĕркунне, кĕркунне хыççăн — хĕлле ылмашăннă. Авалхи халăх çапла шутланă: çуркунне çитсен — çут çанталăк чĕрĕлет, çулла — амаланса çитĕнет, кĕркунне — пурнăç вăрри хатĕрлет, хĕлле вара — çут çанталăк вилет те юрпа хупланать тенĕ вĕсем. Шăп кăна çак синкерлĕх вăхăтĕнче çулталăк улшăнать: кивĕ çул пĕтет — çĕнĕ çул килет. Çĕнĕ çул килсе çут çанталăка вăратсан — Çĕр-пикепе Тӳпе-каччă çĕнĕрен чĕрĕлеççĕ: çĕнĕрен пĕрне-пĕри юратса пĕрлешеççĕ те çĕнĕ тыр-пул çуратаççĕ. Çапла майпа вĕçĕмсĕр çĕнелӳ, улшăну пулса пырать. Авалхи чăвашсем Çĕр-пикепе Тӳпе-каччă пĕрлешнине ака туйĕ тенĕ. Кĕскен — ака туй. Савăнăçлă туй туса пĕрлешнĕ хыççăн çамрăк мăшăрсен ача çуратмалла пулнă. Эпир çав ачана Тыр-пул тетпĕр. Тыр-пул пĕрчине вĕтетсе тунă çимĕçе — Çăкăр тетпĕр. Çăкăр мĕнне пурте пĕлетĕр. Çăкăр вăл сĕтел хушшинче чи асли. Çăкăртан асли ним те çук. Çăкăрсăр çут тĕнчере пурăнаймастпăр та. Çавăнпа та çĕр ĕçĕпе пурăнакан халăхсем, çав шутрах чăвашсем те, çурхи уяв — ака туй ирттернĕ.

Туй хыççăн вĕсем, Çĕр-пикепе Тӳпе каччă, ача çуратнă. Ăна Тыр-пул тесе ят панă. Çав ачана аталантарма Çĕр-пике пулăшнă, Тӳпе-каччă вăй панă: çилпе ачашланă, çумăр ярса çутарнă, хĕвел çинче пиçĕхтернĕ. Ăка пĕтнĕ хыççăн ака туй туса Çĕр-пикепе Тӳпе-каччă кăмăлне çырлахтарни çăкăрлă пулма пулăшать тесе ĕненнĕ чăвашсем. Çавăнпа та халь те пулин ака туй мĕнле иртет — тыр-пул та çапла çитĕнет тесе калаççĕ ваттисем. Тĕрĕсех пуль ку. Эпĕ хамăн сăмаха пĕтертĕм. Тавах сире, ачасем, мана итлеме кăмăл тунăшăн. *(Пуç таять.)*

Асамçă. Ака туй çинчен каласа кăтартнăшăн ачасем сире, хисеплĕ Шурсухал, ака туй парни парас теççĕ. *(Арçын ачапа хĕр ача Шурсухала ака туй парни — сĕлкĕ параççĕ. Вăл — ачасем тĕрлесе хатĕрленĕ ал шăлли. Ачасем парне панă ятпа алă çупаççĕ.)*

Ачасем. Сывлăхлă пул, хисеплĕ Шурсухал!

Шурсухал *(пуç тайса)*. Чипер юлăр, ачасем! Ҫаям-ха эпĕ, манăн çитес çĕрсем татах та пур. *(Тухса каять.)*

Асамçă *(ачасене)*. Чимĕр-ха, ачасем, чимĕр-ха... *(Пуçне ик аллипе тытать.)*

Ачасем. Мĕн пулчĕ тата?

Асамçă. Шурсухал пире ака туй çинчен каласа кăтартрĕ, анчах куç умне нимĕн те кăлармарĕ. Ăн тив ĕнтĕ, аптрамăпăр. Шурсухал кăтартманнине асамçă кăтартма пултарать. Ачасем, сирĕн Çĕр-пикепе Тӳпе-каччă курас килет-и?

Чувашская Республиканская библиотека им. М. Горького
34484 чув

Ачасем *(виçĕ хутчен)*. Курас килет!

Асамçă. Акă асамлă сăмахсем калатăп та, ăрăмçă патакĕпе виççĕ çапатăп та — вĕсем пирĕн ума тухса та тăрĕç. Анчах та вĕсем валли малтанах хисеплĕ вырăн хатĕрлесе хурсан аванрах пулĕ. Хисеп туни нихçан та ытлашши пулас çук.

Асамçă арçын ачапа хĕр ачана чĕнсе илет те вĕсемпе пĕрле ака туй тĕпелĕнче хисеплĕ вырăн хатĕрлет. Икĕ хыçлă тенкеле çума çумăн чăн тĕпеле лартаççĕ. Сулахайрине — Çĕр-пике ларас тенкеле — ешĕл кашмапа, сылтăмрине — Тӳпе-каччă ларас тенкеле — кăвак кашмапа витеççĕ.

Арçын ачапа хĕр ача. Акă вырăн хатĕр!

Асамçă. Эпĕ те хатĕр! *(Юмласа.)* Арабах-карабах-тарабах, юмланă ĕç ăнтăрах, эп хушнă пек пултăрах! Çĕр-пикепе Тӳпе-каччă, эпир сире кĕтетпĕр, ырă сунса чĕнетпĕр! Эсир пире илтĕрех, часрах кунта килĕрех! *(Ăрăмçă патаккипе çĕре виçĕ хут таккать.)*

Çав самантрах Çĕр-пикепе Тӳпе-каччă килсе тухаççĕ. Вĕсем сцена варринче тĕл пулаççĕ те алла-аллăн тытăнаççĕ, вара хуллен утса сцена çинче хисеплĕ çаврăм тăваççĕ. Ун хыççăн халăха пуç тайса хисеплĕ вырăна лараççĕ.

Асамçă *(Çĕр пикепе Тӳпе-Каччă çине кăтартса)*. Акă вĕсем — пире тăранмалăх тырă паракансем. Вĕсем паян пирĕн хисеплĕ те чаплă хăнасем. Авалхи йăлапа, паянхи сăлайпа çуркуннехи чи илемлĕ ака туй уявне пуç-

лама çак хисеплĕ те чаплă хăнасенчен ирĕк ыйтатпăр пулĕ. *(Ачасене.)* Ачасем, мĕнле шутлатăр, ирĕк ыйтатпăр-и?

Ачасем *(вицĕ хутчен)*. Ыйтатпăр!

Асамçă. Хисеплĕ хăнасем, Çĕр-пикепе Тӳпе каччă, ака туй пуçлама ирĕк парсамăр пире. Эпĕ ыйтмастăп, çамрăк халăх ыйтать!

Çĕр-пикепе Тӳпе-каччă *(ура çине тăрса вицĕ хутчен пуç тайса)*. Ирĕк паратпăр! Пурне те ирĕк паратпăр!

Тӳпе-каччă. Ваттисемпе вĕттисем, вăтаммисемпе мăннисем! Выльăр, кулăр, савăнăр! Ӳркенсе çеç ан тăрăр!

Çĕр-пике. Çамрăк халăх, çакна астутаратăп: ака туй мĕнлерех пулать, тыр-пул та çаплах пулĕ.

Тепĕр хут пуç таяççĕ те вырăнĕсене лараççĕ.

Асамçă. Акă мĕн, ачасем! Кĕтнĕ вăхăт çитрĕ вĕт. Пире савăнма ирĕк пачĕç вĕт! Анчах та астăвăр: пĕр салхуллă çын та ан пултăр! Пурин те савăнмалла! Унсăрăн тыр-пул ăнса çитĕнмест! Каларĕç вĕт: ака туй мĕнле иртет— акнă тырă çапла çитĕнет. Тепĕр хут чĕнсе калатăп:

Выльăр, кулăр, савăнăр пурте!

## ИККĔМĔШ ПАЙĔ

Ака туй пьесин иккĕмĕш пайĕнче ача садне çӳрекенсем хăйсен пултарулăхне кăтартаççĕ. Ака туй вăхăтĕнче мĕнле ăмăртусем, вăййăсем, сăвă-юрăсем иттернĕ—

çавсем пурте сцена çинче пулмалла. Кунта пĕр уйрăмлăх кăна: ачасен ака туйĕ мăннисеннипе танлаштарсан савăнăçлăрах та кулăшларах пулса иртмелле.

Ака туй пуçĕ (режиссер). Ака туй пуçланчĕ! Ака туй пуçланчĕ! Авалхи йăлапа, паянхи сăлайпа ака туй уявне ăмăртуçăсен парачĕ уçать. Ăмăртуçăсем, тухăр парада!

Ака туйра вылякан ачасем сцена çине тухса хисеплĕ çаврăм тăваççĕ. Малалла программăпа палăртнă спорт вăййисем пулмалла.

Ака туйра усă курмалли вăйă-кулă тĕслĕхĕсем:

1. «Автанла»—икшерĕн вылямалли ăмăрту вăййи. Автанла тумланнă ачасем икшерĕн сцена çине тухаççĕ те пурăпа çырса палăртнă çаврашкасем таррине тăраççĕ. Вылякансем хăрах уран тăрса пĕр-пĕрне çаврашкаран тĕксе кăларас тесе тупăшаççĕ. Икĕ урипе те çĕр çине пусакан вăйăран тухса ӳкет. Кам çаврашка варринче юлать — çав çĕнтерет.

2. «Ăмăртса чупни»—йышпа тупăшса чупмалли спорт вăййи. Ачасен хăрах уран тăрса стартран пуçласа финиш таран чупмалла. Пĕчĕк михĕсем пулсан михĕсем ăшне пилĕк таран тăрса михĕсемпе те чупма юрать. Кам финиш патне малтан чупса çитет — çав çĕнтерет.

3. «Кĕрешӳ»—кулăшла спорт вăййи. Икĕ ача, майкăпа трусик тăхăннăскерсем, кавир çине тухаççĕ те култарас тĕллевпе кĕрешмелле

айкашаççĕ. Малтан пĕрин юриех аяла пулмалла, кайран теприн аяла пулмалла. Иккĕшĕн те кулăшла кĕрешӳре çĕнтерӳçĕсем пулмалла.

4. «Савăк сасăсем»—сăвă вулакансен конкурсĕ. Кам кулăшларах сăвă вулать—çав çĕнтерет.

5. «Туй ташшисем»—ташă ăстисен ăмăртăвĕ. Кам кăмăлларах е кулăшларах ташлать—çав çĕнтерет.

6. «Тупсăмне пĕл»—тупкавсем (тупмалли юмахсем) каласа тата вĕсен тупсăмĕсене тупас тесе тупăшни. Кам нумайрах тупкав пĕлет е нумай хурав парать—çав çĕнтерет. Тупкавсем ака-суха, апат-çимĕç тата хирте ӳсекен тырпул çинчен пулмалла.

7. «Юратнă юрăсем»—юрласа ăмăртасси тата вылясси. Ака-суха ĕçĕпе çыхăннă юрăсем аванрах пулмалла: «Каравай», «Çерем пăсса вир акрăм» тата ытти те.

8. Юлашкинчен Çĕр-пикепе Тӳпе-каччă пьесăра вылякан артистсене пурне те парнесем валеçсе параççĕ: Çĕр-пике арçын ачасене парне парать, Тӳпе-каччă—хĕр ачасене.

«Ака туй» пьесăн иккĕмĕш пайне кашни ача сачĕ хăй пĕлнĕ пек ирттерет.

## ВĔÇЛЕВ САВВИ

Ака туйĕ пĕтнĕ май
Атьăр пурте киле май.

## Автанпа Тилĕ

*Юмах*

Ака уйăхĕнче анкарти çумĕнче Автанпа Тилĕ тĕл пулаççĕ.

Асăрханулла Автан сарă Тилле курсанах карта юпи çине хăпарса ларать. Сар кĕрĕклĕ Тилĕ çуланкаласа калаçма тытăнать:

— Аван-и, Автан тус, хĕрлĕ çĕлĕк, сулла пуç?

— Аван-ха, астаракан Тилĕ тус!

— Авăк хӳрӳ миçе пус? — тĕпчет Тилĕ.

— Манăн сутлăх хӳре çук!

— Качаллă атту миçе пус?

— Манăн сутлăх ată çук!

— Хĕрлĕ калпаку миçе пус?

— Манăн сутлăх калпак çук!

Аптрасах ситет Тилĕ тус — тата мĕн çинчен калаçмалла? Хӳрипе канашласа пăхать те çапла ыйтать:

— Янкăс сассу миçе пус?

— Янкăс сассăм хама кирлĕ. Эп сана кăмăл туса Хамхам сассине сутма пултаратăп.

— Мĕнле Хамхам сасси? — тĕлĕнет Тилĕ.

— Эй, Кампур, — чĕнет Автан. — Вăхăту пулсан сассуна пар!

Çавăнтах хам-хам-хам! тени илтĕнсе каять. Вăйлă та çирĕп Кампур сасси — такам та хăраса ӳкмелле.

Тилĕ те Кампур сассине илтнĕ-илтменех тĕк татнă пек вăрманалла вирхĕнет. Чикеленсех тарать. Таси паха!

# ÇУРХИ КУНСЕМ



**Пуш уйăхĕ — март**
**Ака уйăхĕ — апрель**
**Çу уйăхĕ — май**

## Аван-и, çуркунне!

Атте, анне тата эпĕ урамра çӳретпĕр.

— Аван-и, çуркунне!—терĕ анне утса пынă çĕртенех чарăнса.

— Ăçта çуркунне?—тĕлĕнсе ыйтрăм эпĕ.

— Ăçта пултăр, куç умĕнчех,— ăнлантарма тытăнчĕ анне.—Авалхи çынсем çуркуннене чĕрĕ çын пек курнă, ун çинчен питĕ нумай сăвă-юрă çырнă, сăнарлă ӳкерчĕксем тунă. Ăна сывăх тăван пек кĕтсе илнĕ, хаклă хăна пек ăсатса янă. Çав йăала пирĕн асăмăрта паян кунччененех упранса пурăнать.

— Ку, тĕрĕсрех каласан, çуркунне те мар-ха, çуркунне палли кăна,—терĕ атте. Вара вăл та çуркунне çинчен калаçма пуçларĕ.

Атте-анне сăмахĕсенчен эпĕ çакна ăнлантăм. Çанталăк ăшăтнипе автан ĕçмелĕх шыв пухăннине çуркунне палли теççĕ иккен. Çуркунне палли хыççăн тепĕр уйăхран тин юр кайма тытăнать. Тата çакна та ăнлантăм: çуркунне виçĕ пайран тăрать-мĕн:

Март—çуркунне пуçламăшĕ.
Апрель—çуркунне тӳпи.
Май—çуркунне вĕçĕ.

Эпĕ çав пулăмсене сăнаса пăхас тетĕп-ха: тĕрĕсех килеççĕ-ши вĕсем? Эсир те сăнаса пăхăр-ха, тусăмсем.

## Авă килет

Авă килет, авă килет
Аслă çулпа автобус —
Автобуспа ларса килет
Авăк хӳре Автан тус.

Акă çитрĕ, акă çитрĕ,
Ак чарăнчĕ автобус —
Автобусран анса юлчĕ
Авăк хӳре Автан тус.

## Ак тинех...

Ак тинех
Килсе çитрĕ çуркунне,
Килсе çитрĕ çурт умне.

Кулленех
Сар хĕвел кулса пăхать —
Савăнма туссем пухать.

Ак кĕçех
Вĕçсе килĕç кайăксем —
Капăр тумлă юрăçсем.

Шӳкĕр* çех
Темшĕн питĕ кулянать:
Куçĕнчен куççуль тумлать.

* Шӳкĕр — тумла пăрĕ (сосулька).

## Автобуспа çӳрекен

Автобуспа халиччен
Эп пĕчченçĕ çӳремен.
Автобуспа çӳрекен
Пассажир пулать иккен.

Ма йăл кулса ларатăп,
Савăнатăп питĕ ир?
Мĕншĕн тесен пулатăп
Паянтан эп пассажир!

## Аквариум

Кĕленче аквариум —
Килти пĕчĕк океан:
Кунта çуккă пысăк хум,
Тăвăл та тухмасть нихçан.

Кунта вĕтĕ пулăсем
Вăй выляççĕ кунĕпе,
Анчах мĕншĕн-ха вĕсем
Калаçмаççĕ пирĕнпе?

Çамрăк пулă чĕпписем
Ма хăраççĕ сас тума?
Çăвар тулли шыв сыпсан
Майлă мар çав калаçма.

## Ӑсату

Хур кайӑксем вӗҫнине
Эп тӑратӑп сӑнаса.
Инҫе ҫула вӗсене
Ӑсататӑп ыр сунса.

— Ӑшӑ енчи ҫӗрсене
Сӗт ҫулӗпе вӗҫӗрех,
Тӑван ҫӗре ҫуркунне
Ҫу ҫулӗпе килӗрех.

Эпӗ ырӑ суннине
Хур кайӑксем итлеҫҫӗ,
Тав сӑмахӗ вырӑнне
Қикак! тесе иртеҫҫӗ.

## Алӑсем

Акӑ вӑл, акӑ вӑл,
Алӑ тени ҫакӑ вӑл.

Алӑ тенӗ япала
Ҫӳрет икӗ ятпала.

Пӗрин ячӗ — Сулахай,
Пур ӗҫре те пӑлахай.

Тепри хӑйне Сылтӑм тет,
Қашни ӗҫшӗн хӗпӗртет.

Сылтăм пĕлет ĕç тума,
Сулахай ма ун пек мар?

Ай-хай, тусăм Сулахай,
Ан пул эс тек пăлахай!

Ĕçлĕх вăя ӳстерет,
Ӳркев хала пĕтерет!

## Анчăк килĕ

Ак ĕнтĕ те мак ĕнтĕ,
Анчăк килĕ çак ĕнтĕ:
Алăкĕ ун — çавракa,
Алăк хуçи — Хураçка.

Алăк хуçи — Хураçка,
Ытла та усал, ваçка.
Хăтсăр çынна курсанах
Хыттăн вĕрет яланах.

## Апат вăхăчĕ

Кун йĕркине пĕлмелле:
Кунне виççĕ çимелле.
Пĕчĕккисен ӳснĕ чух
Ытларах çисен те чух.



## Апат ячĕсем

(Меню)

Ирхи апат — завтрак.
Кăнтăр апачĕ — обед.
Кŭлĕм апачĕ — полдник.
Каçхи апат — ужин.

## Премен апат *

Пĕрремĕш премен — шŭрпе-яшка таврашĕ.
Иккĕмĕш премен — нимĕр, пăтă, тинкĕле.
Виççĕмĕш премен — кĕсел, сĕт, чей, турăх.
Тăваттăмĕш премен — пахча çимĕç, улма-çырла.

## Апатра

Аппа апат пĕçерет,
Ача йышне çитерет:
— Ах, ачасем, килĕрех,
Апат тутлă — çиййĕрех!

Апатра эпир вăр-вар,
Ик хут чĕнме кирлĕ мар.
Хамăр ĕçе пĕлетпĕр —
Чĕмсĕр пулса çиетпĕр.

---

* Премен апат — пĕрре ларса темиçе тĕрлĕ апат çинине чăвашсем çапла калаççĕ.

## Апат ыйтса...

Айван пепке йĕрсе ларать —
Апат ыйтса çăвар карать.
Вĕршĕн кайăк вĕçсе килет —
Вĕри кăвар йăтса килет.
Хура курак хуран çакать,
Шурă курак шывне ярать,
Ула курак улма ярать,
Сарă кайăк салма ярать,
Çуран кайăк çуне ярать.
Айван ача кулса ярать —
Мĕн пуррине çисе ярать,
Апат çисен ташша ярать...
Хоп-па!

## Асанне

Асанне ирех тăрать —
Ăш ыйхăран вăрататать.
Ăш ыйхăран вăрататать,
Вăратнă май сăмахлать:
— Ĉаçпа часах выртмалла,
Ирпе ирех тăмалла.
Ĉам ирпе ирех тăрать —
Пултаруллă çын пулать.

## Асамат

Асамат кĕперĕ
Çӳл тӳпе тĕрлерĕ.

Асамат вăл — карăм,
Çичĕ тĕслĕ ярăм.

Кăвак, кĕрен, сарă —
Пит илемлĕ сарăм.

Сарă, хĕрлĕ, симĕс —
Сăррисем пĕр тикĕс.

Симĕс, сарă, хĕрлĕ —
Кашни тĕс хăй тĕрлĕ.

Мĕн пур тĕссем çиччĕ —
Сăвăласа çитĕ.

## Авăту

*Ыйту*

Автан тени авăтать,
Карăш тени авăтать,
Куккук тени авăтать,
Тата мĕскер авăтать?

Ыйту тупсăмĕ: аслати авăтать.

## Ăшă чун

Ăшăтакан сар хĕвел
Пĕрре анчах тӳпере,
Ăшă чунлă анне те
Пĕрре анчах тĕнчере.

## Аслати

*Йыхрав*

Аслати, аслати,
Пирĕнпе эс ырă пул —
Аслати, аслати,
Пирĕнпе усал ан пул!

Аслати, аслати,
Пирĕнпе хаваслă пул —
Аслати, аслати,
Пирĕнпе хаяр ан пул!

## Вĕçсе килĕр!

*Йыхрав*

Вĕçсе килĕр, вĕçсе килĕр,
Вĕçсе килĕр, кайăксем!
Пирĕн хатĕр кайăк килĕ —
Пур çĕрте те пур вĕсем.

Пур çĕрте те кайăк килĕ —
Килĕшӳллĕ йăвасем.
Вĕçсе килĕр, вĕçсе килĕр,
Вĕçсе килĕр, кайăксем!

## Ĕненмерĕм

Вихтăр килчĕ,
Кулса илчĕ:
— Çăвать çумăр витререн!

Ĕненмерĕм —
Тĕрĕслерĕм:
Çăвать çумăр тӳперен.

Çинук килчĕ,
Кулса илчĕ:
— Çăвать çумăр çӳпçерен!

Ĕненмерĕм —
Тĕрĕслерĕм:
Çăвать çумăр тӳперен.

Чĕкеç килчĕ,
Кулса илчĕ:
— Çăвать çумăр чĕресрен!

Ĕненмерĕм —
Тĕрĕслерĕм:
Çăвать çумăр тӳперен.

## Вăрану

Пĕлтеретĕп савăнсах:
Вăранатăп эп хамах,
Çăвăнатăп эп хамах,
Тумланатăп та хамах.

Туйса илтĕм аванах:
Хам вăранни лайăхрах,
Хам çăвăнни пахарах,
Хам тумланни сумлăрах.

# Ирхине

(Чĕр чун ячĕсене чухлани)

Авăтнă сасăпа вăранчĕ Илемпи.

Ăна вăратаканĕ Ҫуккурук пулчĕ. Илемпи унăн сассине çĕр-пин сасăран та уйăрса илме пултарать.

Вырăн çинчен тăрсанах Мăрккана курчĕ. Мăркка ун ури вĕçнех çăмхаланса выртнă та сывăрнă. Мăркка куçне уçнă-уçманах мăрлатма пуçларĕ: «Мăр-мăр-мăр, эпĕ те санпа пĕрлех вăрантăм»,—терĕ пулас.

Ҫăвак куçлă Илемпи тирпейленсе картишне тухрĕ. Ҫартлащка çумĕнче Няххи выртать иккен. Вăл Илемпие курсанах хам-хам-хам! тесе саламларĕ. Илемпи ăна уншăн пуçĕнчен ачашласа илчĕ.

Лаç умĕнче Чăпаркка уткаласа çӳрет: пĕрчĕ тупма сĕмленет. Илемпи кĕсйинчен тĕпренчĕкĕсене çĕр çине силлерĕ. Чăпаркка чупса пычĕ те васкасах сăхса çиме пуçларĕ. Авăк хӳреллĕ Ҫуккурук та чупса çитрĕ, ко-ко-ко! тесе хăйĕн чĕлхипе калаçма пуçларĕ.

Ҫатан çумĕнче Мукмук выртать. Ун умĕнче нимле апат та çук—çапах та мăйрашка пĕр вĕçĕмсĕр кавлет. Ун çумĕнчех икĕ Мекмек: пĕри—хура, тепри—шурă. Вĕсем те кавлеççĕ.

Тислĕк купи çумĕнче Чухчух чакаланать, хутран-ситрен нăрăх-нăрăх! текелет.

Яланхи йăлипе Илемпи картишĕнчи выльăх-чĕрлĕхе апат пачĕ, пĕчĕк валашкана каткаран шыв ăсса ячĕ. Ку вăл чăх-чĕп валли. Ăш

хыппине пусарма ĕнтĕ. Ирхи ĕçсене вĕçлерĕ те Илемпи апат çиме пӳрте кĕчĕ. Қалăр-ха, ачасем, Илемпи ирхине камсене курчĕ-ши?

Тупсăмĕ: Илемпи ирхине килти чĕр чунсене курчĕ. Вĕсем: автан, кушак, йытă, хура сурăх, шурă сурăх, ĕне, сысна, чăх.

## Йыхравсем

**Сулхăн, кай!**

Сулхăн, кай, сулхăн, кай —
Сулахайри çулпа кай!
Çутлăх, кил, çутлăх, кил —
Сылтăм енчи çулпа кил!

**Хĕвел, тух!**

Хĕвел, тух, хĕвел, тух —
Вăйă карти пухатпăр.
Хĕвел, тух, хĕвел, тух —
Çĕнĕ сăвă калатпăр.

Хĕвел, тух, хĕвел, тух —
Вăйăç умне тăратпăр.
Хĕвел, тух, хĕвел, тух —
Тапăртатса ташлатпăр.

Хĕвел, тух, хĕвел, тух —
Саламласа юрлатпăр.
Хĕвел, тух, хĕвел, тух —
Савса ырлăх сунатпăр!

## Кун ячӗсем

Тунти кун — понедельник
Ытлари кун — вторник
Юн кун — среда
Кӗҫнерни кун — четверг
Эрне кун — пятница
Шӑмат кун — суббота
Вырсарни кун — воскресенье

Кун ячӗсем пурӗ — 7 (ҫиччӗ). Ҫичӗ кун пӗрлӗхне эрне тетпӗр. Тепӗр тӗрлӗ те калама пулать — эрне хушши. Тӑватӑ эрне пӗрлӗхне уйӑх тетпӗр.

Эрне е эрне хушши ҫинчен халӑхра ҫакӑн пек хайлав пур:

Эрнесен те хушши ҫичӗ кун,
Ҫичӗ кун хушшинче килсе кур,
Ҫичӗ кун хушшинче килмесен —
Ятарлӑ кун тупса килсе кур.

Ятарлӑ кун — малтанах палӑртса хунӑ кун. Сӑмахран: ака кунӗ. Тепӗр тӗрлӗ — акана тухма палӑртса хунӑ кун. Вӑл апрель уйӑхӗн вӗҫӗнче те, май уйӑхӗн пуҫламӑшӗнче те пулма пултарать. Ӑна ҫанталӑк сӑнавҫисем палӑртаҫҫӗ.

Тепӗр тӗслӗх: Аннесен кунӗ. Тепӗр тӗрлӗ — Хӗрарӑмсен кунӗ. Вӑл яланах пӗр вӑхӑтра — март уйӑхӗн 8-мӗш числинче пулать.

Хӑвӑр палӑртса хунӑ кунсем те ку шута кӗреҫҫӗ. Сӑмахран: мӑйӑр кунӗ, ҫырла кунӗ, кӑмпа кунӗ, юрӑ-ташӑ кунӗ...

## Кам калаçать?

— Кам калаçать шăпăр-шăпăр?
Кам сасси вăл илтĕнет?
— Кам-ха пултăр, шалкăм çумăр
Сунчăкпала пуплешет.

## Кăçатă

*Ыйту*

Ултă çулхи Улаттин
Çунать терĕç кăçатти:
Эп сăнарăм нумайччен —
Ним те çунмасть уринче.

Мĕншĕн мана суйрĕç-ши,
Манран кулас терĕç-ши?
Питĕ касать пĕлменни:
«Кăçат çунать» — мĕн тени?

Ыйту хуравĕ: «Кăçатă çунать» — вылятса каланă сăмах, вăл йĕпе-сапа вăхăтра кăçатă исленет-йĕпенет тенине пĕлтерет.

## Кулине

*Калаçу*

— Ăçтан тупнă Кулине
Килĕшÿллĕ куллине?
— Ирхи хĕвел куллине
Илнĕ пулĕ хăй çине.
— Ăçтан тупнă Кулине
Савăнăçлă кăмăлне?

— Ирхи кайăк сассине
Илнĕ пулĕ хăй чунне.
— Ăçтан тупнă Кулине
Яланхи тирпейлĕхне?
— Ашшĕ-амăш ĕçлĕхне
Илнĕ пулĕ хăй чунне.



## Машина

Машина çула тухать —
Кустăрми юрра ярать:
— Ша-ша-ша, ша-ша-ша,
Кустаратпăр Канаша!

Машина çил пек вĕçет,
Кустăрми çула виçет:
— Ши-ши-ши, ши-ши-ши,
Çулĕсем çатма йышши!

Машина ырса çитет,
Кустăрми те ĕшенет:
— Ше-ше-ше, ше-ше-ше,
Канаш, йышăн пĕлĕше!

## Мĕн тума?

*Сăвă-выйту*

— Кам пултарĕ калама:
Алă кирлĕ мĕн тума?
— Алă кирлĕ ал тытма,
Алăксем уçса хупма.

— Кам пултарĕ калама:
Куçсем кирлĕ мĕн тума?
— Куçсем кирлĕ кун курма,
Тавралăха куçлама.

— Ҫам пултарĕ калама:
Сасă кирлĕ мĕн тума?
— Сасă кирлĕ калаҫма,
Сăвăлама-юрлама.

— Ҫам пултарĕ калама:
Хăлха кирлĕ мĕн тума?
— Хăлха кирлĕ итлеме,
Ыр сăмахсем ҫӳретме.

— Ҫам пултарĕ калама:
Чĕлхе кирлĕ мĕн тума?
— Чĕлхе кирлĕ калаҫма,
Пĕр-пĕринпе паллашма.

## Парне

Анне килчĕ лавккаран,
Ҫулса кĕчĕ алăкран.
Анне мĕншĕн кулкалать?—
Вăл пире парне парать.

Аппана мĕнле парне?—
Аллă пуслăх мулине.
Мулине—пĕветнĕ ҫип,
Вăл аппашăн чун уҫҫи.

Йăмăка мĕнле парне?—
Ҫăлтăр куҫлă пукане.
Ҫăлтăр куҫ умра выртать—
Ҫывăрсан та йăл кулать.

Ман валли мĕнле парне?
Мана маннă-шим анне?
Çук, манса кайман иккен,
Ман парне вăл...
Ман парне вăл — КĔНЕКЕ.

## Пăрчăканпа ача

Ача:
— Пăрăл-пăрăл пăрчăкан,
Пăрсем çинче мĕн тăван?

Пăрчăкан:
— Пăр çинче эп кунĕпе
Пăр вататăп хўрепе.

## Пăрчăкан çинчен

Пăрчăкан — ăшă енче хĕл каçакан вĕçен кайăк. Вăл кăнтăр енчен шăп та лăп пăр тапранас умĕн килсе çитет. Килсе çитнĕ-çитменех пăрсене тĕрĕслеме тытăнать. Пăр катрамĕ çине пырса ларать те пăр каскаланă пек туса хăйĕн вăрăм хўрипе аялалла-çўлелле сулласа ларать. Пăрчăкан çуллахи вăхăтсенче лапамсенче, шыв-шур таврашĕнче çимелли шыраса çўрет. Пăр çинче ларнă чухнехи пекех, çĕр çинче утса çўренĕ чухне те яланах хўрине вылятать.

Пăрчăкансем пирĕн енче икĕ тĕслисем тĕл пулаççĕ: сарă пăрчăкан тата шурă пăрчăкан.

## Пĕлетĕп

Апат пиçсе ĕлкĕрсен
Мĕн тăвасса пĕлетĕп:
Сĕтел çинче пуррине
Шăппăн кăна çиетĕп.

Апат çисе пĕтерсен
Мĕн тăвасса туятăп:
Апат-çимĕç ăстине
Тав сăмахĕ калатăп.

## Пĕлĕтсемпе çил

*Калаçу*

— Ах, пĕлĕтсем, пĕлĕтсем,
Ăçталла-ши çулăрсем?

— Ăçталла çил хӳтерет —
Унталла вĕçме тивет.

## Пĕрчĕк

*Юмах*

Акă пĕрчĕ. Пĕр пĕчĕкçĕ пĕрчĕ.

Ăна, питĕ пĕчĕк пулнăран, кĕскен кăна Пĕрчĕк тейĕпĕр, Пĕрчĕк ятлă вăрлăх пĕрчи.

Вăт ĕнтĕ выртать Пĕрчĕк хура тăпра айĕнче. Пĕлетĕр пуль, çĕр айĕнче унта питĕ тĕттĕм тата питĕ-питĕ хĕсĕк. Мĕн тăвас тен? Выртас

пулать. Тӳсес пулать. Чăтас пулать. Çапла, выртасах пулать вăхăт çитиччен.

Выртсан-выртсан пĕчĕкçĕ Пĕрчĕ çӳçенсе каять. Мĕн амакĕ? Ку вăл çӳлтен, тăпра витĕр сăрхăнса анакан сивĕ тумлам пулчĕ иккен. Çав сулхăн тумлам самаях çӳçентерчĕ те ăна. Пĕрчĕк çилленес тесеччĕ те сивĕ тумлама, анчах та ĕлкĕреймерĕ — çӳлелле ӳсме тытăннине туйса илчĕ. Пĕчĕкçĕ Пĕрчĕк сулхăн тумлам пулăшнипе ӳсет те ӳсет çӳлелле. Мекĕрленсе-тертленсе çӳлелле ăнтăлать. Йĕп вĕçĕ пек кăна пулин те кĕçех вăл çĕр пичĕ çине шăтарса тухрĕ. Мекĕрленсе тертленнипе хайхискер хĕп-хĕрлĕ хĕрелсе кайрĕ. Пĕвĕ-сийĕ симĕсĕн-хĕрлĕн курăнать. Çăмăл мар çав, ытла та йывăр çĕр айĕнчен шăтарса тухасси! Сая каймарĕ тертленни — шăтса тухрĕ çут тĕнчене.

И-и-и, мĕн курать-ха пĕчĕкçĕ Пĕрчĕк? Аслă тĕнче калама çук ирĕклĕ иккен. Йĕри-тавра чиксĕр инçет! Тӳперен такам йăл та йăл кулса пăхать. Кулли унăн ăшă та çутă! Сăвăласа, сăнарласах калас килет ун çинчен:

Çавраскер, çутăскер,
Çулăм-вут пек вĕрискер,
Çӳл тӳперен пăхакан,
Çутă парса тăракан.

Калăр-ха, ачасем, çав япала мĕскер-ши? (Ачасем калаççĕ.) Çапла, çав япала вăл — сарă Хĕвел. Вăл пире ăшă та, çутă та парса тăрать.

Çавра тĕнчере Хĕвел кăна мар, тĕлĕнтермĕшсем татах та нумай иккен. Акă, пĕчĕкçĕ Пĕрчĕк çумĕнченех такам ачашшăн сĕртĕнсе иртрĕ. Ку кăнтăр енчен вĕрекен ăшă Çил иккен. Ăна-кăна пĕлме сĕмленекен Пĕрчĕк йĕри-тавра пăхкаласа илчĕ те... йĕп вĕçĕ пек шĕвĕрккесем çĕр çине питĕ йышлăн тухса тулнине курах кайрĕ. Хĕç пек çунат сарса ӳснĕ майăн вĕсем ешерсе симĕсленсе пыраççĕ — хĕрлĕ вĕçлĕ йĕпсенчен симĕс калча пулса тăраççĕ. Лаппипе ешĕл симĕс калча! Лаппипе пулас пурлăх, пулас ырлăх!

Ӳсет те ӳсет çӳлелле пирĕн симĕсленме ĕлкĕрнĕ Пĕрчĕк. Хăй пекех пин-пин ешĕл симĕс калчасемпе тупăшса ӳсет. Ӳстĕрех! Пĕлеймест-ха вăл халлĕхе малалла мĕн пулассине. Пĕлеймест-ха вăл ешĕл симĕс калчасем ылтăн тинĕс пуласса. Вăхăт шунă май çак ешĕл симĕс калчасем ылтăн тинĕс пулса хум хыççăн хум кустарĕç, пĕтĕм халăха савăнтарĕç.

Эсир, ачасем, ылтăн тинĕс мĕн иккенне пĕлетĕр-и?

Явапĕ ун çавăн пек: ылтăн тинĕс — тырă пусси.

## Пуканесем

Пуканеçĕм, пукане,
Эс мана ан çилленех:
Ман садике каймалла —
Уйрăлатпăр санпала.

Пуканеçĕм, пукане,
Эс мана ан çилленех:
Садран килсен каçпала
Тĕл пулатпăр санпала.

Пуканеçĕм, пукане,
Эс мана ан çилленех:
Вăхăт пулĕ выляма —
Час выртмастăп çывăрма.

## Пуркка

*Шутлав*

Пуркка пӳрне вылятать,
Пӳрнисене ят парать:

Пысăк пӳрне — пысăк тус,
Шĕвĕр пӳрне — шĕвĕр тус,
Вăта пӳрне — вăтам тус,
Ятсăр пӳрне — ятсăр тус,
Кача пӳрне — кĕçĕн тус.

Пилĕк пӳрне пур çинче
Пилсĕр мар эп çĕр çинче.



## Сăмавар

*Ыйту*

Авалхи йĕс сăмавар
Кĕç вĕреме кĕмелле.
Халь ытарлăн сăмахлар:
Чейне мĕнпе ĕçмелле?

Ыйту хуравĕ: çăварпа ĕçмелле.

## Çăка пылĕ

Çăка çулçи çавракa,
Çавăнта мĕн çырнă-ши?
Çуркуннепе таврана
Çăка сарать пыл шăрши.
Ах, тутлă!

Çĕнĕ вĕлле хурчĕсем
Çăка çинче вĕçеççĕ,
Çавсен пылак çимĕçне
Пĕчĕккисем çиеççĕ.
Ах, тутлă!

## Çăкăр

Çăкăр кирлĕ ирхине,
Çăкăр кирлĕ каçхине,
Çăкăр кирлĕ кашни кун —
Çавăнта хăвачĕ ун.

Çăкăр пултăр кăпăшрах,
Çăкăр пултăр пахарах,
Çăкăр пултăр тутлăрах,
Çăкăр пултăр яланах!

## Çерçи пуххи

Çерçи пуххи шавлать,
Çерçи пуххи кĕрлет —
Çерçи пуххи çапла
Лапра шывра мунча кĕрет.

Çерçи пуххи шавлать,
Çерçи пуххи кĕрлет —
Çерçи пуххи çапла
Тусан çинче шыва кĕрет.

## Çурхи çил

*Йыхрав*

Вăштăр-вăштăр çурхи çил,
Кăнтăр енчен вĕçсе кил —
Кĕтнĕ ăшă илсе кил,
Илсе кил!

Вăштăр-вăштăр çурхи çил,
Сала урлă вĕçсе кил —
Сиплĕ ăшă илсе кил,
Илсе кил!

Вăштăр-вăштăр çурхи çил,
Хирсем урлă вĕçсе кил —
Хитре кунсем илсе кил,
Илсе кил!

Вăштăр-вăштăр ăшă çил,
Хырлăх урлă вĕçсе кил —
Ырă кунсем илсе кил,
Илсе кил!

## Çумăр, çу!

*Йыхрав*

Ăшă çумăр çунăран
Вăй илет ана-çаран.
Çумăр, çу!
Çумăр, çу!

Лăпкă çумăр çунăран
Ҫапăрланать сĕм вăрман.
Çумăр, çу!
Çумăр, çу!
Ырă çумăр çунăран
Тырă пулать калчаран.
Çумăр, çу!
Çумăр, çу!
Сиплĕ çумăр çунăран
Мăн çын пулать ачаран.
Çумăр, çу!
Çумăр, çу!

## Туслăх

Ҫăвакарчăн тусăмсем,
Апат çиме килĕрех.
Сăхкаласан пĕрчĕсем
Инçетелле вĕçĕрех.

Инçетелле вĕçĕрех,
Тĕрлĕ çĕре çитĕрех.
Тĕрлĕ çĕре çитĕрех,
Салам парса килĕрех.

Çут тĕнчери ачасен
Пĕр тăван пек пулмалла,
Пур чăрмава çĕнтерсе
Туслăх çулĕ хывмалла.



## Теттесем

Ах, епле ĕçре пултарнă
Пирĕн аслă аттесем,
Сахал мар туса тултарнă
Ытарма çук теттесем.

Вĕсемпе эпир вылятпăр,
Йăпанатпăр кунсерен.
Мăннисен ĕçне хаклатпăр,
Тав тăватпăр чĕререн.

## Ӳпрепе Шăна

*Юмах*

Аслă, ирĕк улăхра Ӳпрепе Шăна тĕл пулаççĕ.

Вăрăм курăк туни çине ларса вĕсем калаçу

пуçараççĕ — хăйсен кулленхи ыйтăвĕсене хус-
катаççĕ.

— Мĕнле пурăнатăн, Ӳпре тусăм? — тет
Шăна.

— Ӳпкелешме сăлтавăм çук, — тет Ӳпре хул
пуççине сиктерсе.

— Мĕншĕн апат тулăх вăхăтра та ӳт
хушаймастăн? — тĕпчет Шăна.

— Ӳт хушни кирлех те мар мана, — хурав-
лать Ӳпре. — Вăрăм ĕмĕр пурăнмастăп вĕт эпĕ.
Ӳпресен мехелĕ çавăн пек: малтан йĕркеллĕ
мăшăр шыраса тупмалла, мăшăр тупсан —
туй туса пĕрлешмелле, туй туса пĕрлешсен —
çителĕклĕ таран çăмарта хывса хăвармалла,
вара — ĕçĕ те пĕтнĕ! Урăх мĕн туса пурăн-
малла?!

Кăштах тăхтасан Ӳпре ыйтма тытăнать:

— Мĕнлерех сан пурнăçу, Шăна тусăм? —
тет вăл.

— Пурнăçне начар теме çук, пурăнкалатăп-
ха пĕр майлă. Ара çав, сивĕ кунсем çитиччен.
Ман тĕллевĕм те пĕрре кăна — вăй çитнĕ таран
ĕрче те ĕрче. Урăх мĕн туса пурăнмалла?!

— Ĕрчевлĕ йăх эппин эсир?

— Мĕнле калас — ĕрчеме аванах пĕлетпĕр.
Юрать-ха пĕр пуслăхра тăхăр вун тăхăр
çăмарта кăна хывса хуркалатăп, эхер те çĕр
те пĕр çăмарта хывас пулсан — Çĕр чăмăрĕ
тахçанах тулса лармалла. Çĕр чăмăрĕ ытла та
пĕчĕк вĕт вăл, çине тăрса тăрăшсан — çур
уйăх хушшинчех тулса ларма пултарать. Çап-
ла вара шăна йышне шутсăр ĕрчевлĕ йыш

теме те юрать,— хавхаланса калать Шăна.

— Чăнах та, шăнасем шутсăр ĕрчевлĕ,— вĕсем хăйсен шутне хăйсем те пĕлмеççĕ. Вĕсен йышне ЭВМ анчах шутласа кăларма пултарать.

— Мĕн тени вара вăл ЭВМ?

— Ăна ăслă çынсем электровиçелĕх машини теççĕ.

Сăна... Çуллахи вăхăтра мĕн чухлĕ шăна!..

## Хитре-и!

Кĕрен чечек хитре-и,
Хĕрлĕ чечек хитре-и?
Хитре пуль те хитрине —
Татас килмест хиртине:
Татнă чечек час шанать,
Ахалех сая каять.

Кĕрен чечек хитре-и,
Хĕрлĕ чечек хитре-и?
Хитре пуль те хитрине —
Хĕрхенетĕп хиртине:
Сарă хĕвел айĕнче
Савăнтăр вăл нумайччен.

Кĕрен чечек хитре-и,
Хĕрлĕ чечек хитре-и?
Хитре пуль те хитрине —
Хĕрхенетĕп хиртине:
Чечек капăр ытла та
Хăй ларакан вырăнта!



## Хĕвел

*Каласу-юмах*

— Хĕвел ăçта çĕр каçать?
— Ăшă-ăшă йăвинче.
— Хĕвел ăçта çывăрать?
— Кăвак чатăр айĕнче.
— Хĕвел айне мĕн сарать?
— Мамăк хывнă тӳшекне.
— Пуçĕ айне мĕн хурать?
— Шурă пĕлĕт минтерне.
— Çиелтен мĕн витĕнет?
— Çăлтăр сапнă çиттине.
— Мĕнле тĕлĕк тĕлленет?
— Çĕр çинче мĕн курнине.

## Хĕвел, тух!

*Йыхрав*

Хĕвел, Хĕвел, Хĕвел, тух,
Хĕвеклене курма тух!
Хĕвеклене пулмасан —
Хĕветĕре курма тух!

Хĕвеклепе Хĕветĕр
Хĕрсе вăйă выляççĕ,
Хĕрлĕ питлĕ Хĕвеле
Хĕпĕртесе ырлаççĕ!

## Пĕчĕкскерсем

Ма илемлĕ Илемпи?
Ирпе ирех тăнăран,
Ирех тăрса пит-куçне
Сывлăмпала çунăран.

Ма сăпайлă Сăпани?
Ирех тăма пĕлнĕрен,
Ирех тăрса аллине
Ыр ĕç тытма пĕлнĕрен.

Ма хисеплĕ Хитрепи?
Ирех тăма пĕлнĕрен,
Ирех тăрса çынсене
Саламлама пĕлнĕрен.

Ма чиперкке Чиперпи?
Ирех тăма пĕлнĕрен,
Ирех тăрса пӳ-сине
Тирпейлеме пĕлнĕрен.

Ма ятуллă Ялампи?
Ирех тăма пĕлнĕрен,
Ирех тăрса кирлине
Янтăлама пĕлнĕрен.

## Чӳхенӳ

Сар кайӑксем ир ҫинче
Сарӑ тинӗс шывӗнче
Чӳхенейнӗ пуль —
Ҫавӑнпа ҫав кайӑксем
Сарӑ тӗклӗ пулнӑ пуль.

Хурчӑкасем ир ҫинче
Хура тинӗс шывӗнче
Чӳхенейнӗ пуль —
Ҫавӑнпа ҫав кайӑксем
Хура тӗклӗ пулнӑ пуль.

Шур акӑшсем ир ҫинче
Шурӑ тинӗс шывӗнче
Чӳхенейнӗ пуль —
Ҫавӑнпа ҫав кайӑксем
Шурӑ тӗклӗ пулнӑ пуль.

## Шӑнкӑрчӑ

Ӑшӑ енчен васкаса
Вӗҫсе килчӗ шӑнкӑрчӑ,
Ҫӗн йӑвашӑн савӑнса
Ҫунат ҫапса шӑхӑрчӗ:

Шиу-шиу-ши-ши-ши,
Илсе килтӗм ҫур ӑшши,
Сире валли чун ӑшши
Пачах пулмӗ ытлашши!..

## Шапасем

Акă эпир — шапасем,
Пурте шывпа туслисем.
Ишетпĕр те чăматпăр,
Концертсем те паратпăр.
Ир-каç анăр шыв хĕрне
Тăраниччен тĕлĕнме,
Шыв шаписен юррине
Шавламасăр итлеме.
Килĕр-килĕр шыв хĕрне,
Пурте тупĕç кирлине.
Шапасем юрланă чух
Шăпчăксен те сасси çук!

## Шурă кăвакарчăн

Акă тухăç кăвакарчĕ —
Килсе çитрĕ çутă ир.
Вĕçех, тусăм кăвакарчăн,
Çут тĕнчере пултăр МИР!

## Эрне хушши

I

Тунти кун турăх çирĕм,
Ытлари кун ыхра çирĕм.
Юн кун юсман çирĕм,
Кĕçнерни кун кĕсел çирĕм,

Эрне кун энĕç çирĕм,
Шăмат кун шăрттан çирĕм,
Вырсарни кун кунĕпех
Выçă пултăм пурпĕрех.

2

Тунти кун ту çинчен ӳкрĕм,
Ытлари кун ыратрĕ,
Юн кун юн юхрĕ,
Кĕçнерни кун кĕçтерĕ,
Эрне кун эмеллерĕм,
Шăмат кун шăтса юхрĕ,
Вырсарни кун вăй пухрăм,
Вăй пухса вăййа тухрăм.

3

Тунти кун — туслăх кунĕ,
Ытлари кун — ыйту кунĕ,
Юн кун — юмах кунĕ,
Кĕçнерни кун — кĕвĕ кунĕ,
Эрне кун — эреш кунĕ,
Шăмат кун — шутлав кунĕ,
Вырсарни кун — канмалла,
Канса вăй-хал пухмалла.

## Юлхав эрни

Юлхав мĕнле пурăнать?
Юлхав çапла пурăнать:
Тунти кун тунсăхлать,

Ытлари кун ыйхăлать,
Юн кун юнтарать,
Кĕçнерни кун кĕвĕçет,
Эрне кун эрленет,
Шăмат кун шăмарать,
Вырсарни кун — яра кун
Кахалланма вăхăт ун.

## Ыйтусемпе ытарсем

Ыйтусем — тупмалли сăмахсем (вопросы).
Ытарсем — ытарлă ыйтусем (скрытки).

Ака вĕçен кайăкĕ мĕн ятлă? (Хура курак, вăл ана çинче хуртсем пуçтарать.)

Аслати хăçан авăтма тытăнать? (Чĕкеçсем вĕçсе килсен.)

Атăл вĕçен кайăкĕ мĕн ятлă? (Чарлак. Ăна тепĕр тĕрлĕ Атăл чарлакĕ е шурă чарлак теççĕ.)

Вăрман тухтăрĕ мĕнле вĕçен кайăк? (Ула такка.)

Мĕнле сĕрлĕх вĕçекен чечек пек? (Лĕпĕш.)

Йĕплĕ кĕрĕк хуçи мĕн ятлă? (Чĕрĕп. Ун тирĕ çинче çăм вырăнне йĕпсем ӳсеççĕ.)

Йыт пуллисен хăш урисем маларах шăтса тухаççĕ: кайрисем-и, малтисем-и? (Кайри урисем малтан шăтса тухаççĕ.)

Камăн ачи çунатсăрах вĕçсе çӳрет? (Çил ачи.)

Катăк тута мĕнле чĕр чун? (Куян, мулкач.)

Кушака мĕнле чĕнеççĕ? (Пĕç-пĕç-пĕç теççĕ.)

Мĕнле кишĕре çиме юрамасть? (Пă кишĕрне. Ăна тепĕр тĕрлĕ шурă кишĕр шӳкĕр теççĕ.)

Пăр ватакан вĕçен кайăк мĕн ятлă-ши (Пăрчăкан.)

Пĕт-пĕлтĕк тесе мĕнле вĕçен кайăк калать (Путене.)

Çуркунне хăçан пуçланать? (Пуш уйăхĕ вĕçĕнче.)

Çурхи вăхăт хăçан вĕçленет? (Вĕçен кайăк сем кăнтăртан вĕççе килсе пĕтсен.)

Çурхи кăмпасем мĕн ятлă? (Ака кămпи кăтра кămпа.)

Тӳпе юрăçи мĕнле вĕçен кайăк? (Тăри. Ан ĕлĕк ака юрăçи тенĕ.)

Чакăлти вĕçен кайăк мĕн ятлă? (Чакак. Те пĕр тĕрлĕ — хăна кайăкĕ.)

Чĕкеçсем хăçан вĕççе килеççĕ? (Аслат авăтма тытăнсан.)

Шыв шаписем хăçан кăшкăрашма тыта наççĕ? (Аслатиллĕ çумăр хыççăн.)

Эрешмен миçе ураллă? (Сакăр ураллă.)

Эрешмен ячĕ ăçтан тухса кайнă? (Танат валли эреш çыхнăран.)

Юр айĕнчен шăтса тухакан чечек мĕ ятлă? (Çеçпĕл.)

Юрă ăсти мĕнле вĕçен кайăк-ши? (Шăп чăк.)

Яшка курăкĕсем мĕн ятлă? (Вĕлтĕрен пултăран, серте, кăшкар ути.)

# ÇУЛЛАХИ КУНСЕМ



**Çĕртме уйăхĕ — июнь**
**Утă уйăхĕ — июль**
**Çурла уйăхĕ — август**

# Салам, çулла!

Анне, атте тата эпĕ улăхра çӳретпĕр.

— Салам, çулла!— терĕ анне. Çапла каларĕ те ман çине куç хӳрипе пăхса илчĕ.

— Салам çуллахи вăхăт!— терĕ атте. Вăл та ман еннелле пăхса илчĕ. Хальхинче вĕсем кама саламланине аванах ăнкартăм.

— Салам, салам, çуллахи ырă çанталăк!— терĕм эпĕ те хĕпĕртесе.

Анне те, атте те мана тавçăруллă пулнăшăн ырларĕç. Вара вĕсем çуллахи вăхăт çинчен çăмăл калаçу пуçларĕç.

Вĕсен калаçăвĕ ман пуçа та кĕрсе юлчĕ. Ма саламлас мар, ма хисеплес мар çуркунне хыççăнхи хĕвеллĕ кунсен ярăмне?

Çуллахи вăхăт ваттисемпе çамрăксемшĕн те, ачасемшĕн те калама çук паха вăхăт. Кашни çын, кашни чун çуллахи вăхăтпа кирлĕ пек усă курса юлма тăрăшать. Ĕçлеме те, канма та, çул çӳреме те çуллахи вăхăтран лайăххи çукрах пулĕ.

Çуллахи вăхăт та виçĕ пайран тăрать иккен:
Июнь (çĕртме)—çуллахи кунсен пуçламăшĕ.
Июль (утă)—çуллахи кунсен тӳпи.
Август (çурла)—çуллахи кунсен вĕçĕмĕ.
Ах, манăн пĕлмелли питĕ нумай иккен.

Ачасем, çуллахи кунсем мĕнпе паллă-ши?



## Автан йăли

*Ытарлăх*

Автан тусăн йăлине
Ватти-вĕтти ăнланать.
Ҫалăр, автан ирхине
Мĕншĕн хытă авăтать?

Тупсăмĕ: авăтмалăх сасси пулнăран.

## Акăшпа чĕппи

*Сăнав*

Акă вăл —
Акăш тенĕскер,
Питĕ авăк мăйлăскер,
Питĕ шурă тĕклĕскер.

Ак чĕппи,
Питĕ-питĕ ăслăскер,
Питĕ-питĕ чеескер —
Ҫурăм ҫине ларнăскер.

Амăш ишет
Қаялла та малалла.
Чĕппин мĕскер тумалла?
Шиплетсе çех лармалла.

Мĕн калас,
Қун пек пурнăç пит канас.
Çурăм çинчен ма анас —
Ярăнас та ярăнас!

Ах, пепкей,
Ачашланма ан вĕрен,
Шыв çинче ишме вĕрен —
Қирлĕ пулĕ ӳлĕмрен!

## Ахах çуни

*Тупкав*

Ах-ах ирхине
Ахах çурĕ çĕр çине:
Автан курчĕ — авăнчĕ,
Ӑсан курчĕ — ăмсанчĕ,
Қашкăр курчĕ — кавсăлчĕ,
Қуян курчĕ — кулянчĕ,
Тилĕ курчĕ — тилĕрчĕ,
Упа курчĕ — мĕкĕрчĕ...
Хĕвел кулса пăхрĕ те —
Хаклă мула пухрĕ те!

Сăвăра мĕнле мул çинчен сăмах пырать-ши?

Тупкав тупсăмĕ: сывлăм çинчен сăмах пырать.

## Ăшăтсан

Ака-суха пĕтсессĕн,
Ăшă кунсем çитсессĕн
Каталăхра çӳретпĕр —
Тĕрлĕ çырла çиетпĕр.

Хăмла çырли çиетпĕр —
Хăва пекех ӳсетпĕр.

Хĕрлĕ çырла çиетпĕр —
Хĕрлĕ питлĕ çӳретпĕр.

Хура çырла çиетпĕр —
Хура куçлă пулатпăр.

Шăлан çырли çиетпĕр —
Шурă шăллă пулатпăр.

## Ăстасем

*Вăйă*

— Каласамăр, мĕн тума
Шиклĕ Куян пит ăста?
— Шур купăста кăшлама
Шиклĕ Куян пит ăста!

— Каласамăр, мĕн тума
Чее Тилĕ пит ăста?
— Чăх-чĕпсене суйлама
Чее Тилĕ пит ăста!

— Ҫаласамӑр, мӗн тума
Ҫавсӑк Ҫашкӑр пит ӑста?
— Ҫил выльӑхне тустарма
Ҫавсӑк Ҫашкӑр пит ӑста!

— Ҫаласамӑр, мӗн тума
Услап Упа пит ӑста?
— Хӗл каҫипе ҫывӑрма
Услап Упа пит ӑста!

## Варени

Варени пӗҫереҫҫӗ,
Пӗлетӗп, ҫырлаpан.
Ватти-вӗтти ҫиеҫҫӗ
Сипетлӗ пулнӑран.

Вӑл сиплӗ те пит тутлӑ,
Тен, тутлӑ сахӑртан,
Анчах ҫырли пит шутлӑ —
Ҫиме май ҫук ялан.

## Вӑрман

Ҫур кунӗсен ҫулӗпе
Ҫайӑп эпӗ вӑрмана.
Сертепе те чечекпе
Ҫӗтсе илӗ вӑл мана.

Çу кунĕсен çулĕпе
Кайăп эпĕ вăрмана.
Çырлапа та çĕмĕртпе
Кĕтсе илĕ вăл мана.

Кĕр кунĕсен çулĕпе
Кайăп эпĕ вăрмана.
Кăмпапа та йĕкелпе
Кĕтсе илĕ вăл мана.

Хĕл кунĕсен çулĕпе
Кайăп эпĕ вăрмана.
Кĕмĕл сапнă илемпе
Кĕтсе илĕ вăл мана.

## **Вĕçкĕнсем**

Вĕçелисăн виçĕ хĕр,
Виççĕшĕ те вĕçкĕн хĕр:

Кĕтернен кĕпи вĕçкĕн,
Сăпанин сăнĕ вĕçкĕн,
Чĕкеçĕн чĕлхи вĕçкĕн.

Эп хам
вĕçкĕн йышши мар —
Вĕçкĕнрен те каях мар.

## Елюк

Елюк питĕ тăрăшать —
Пахчара шав тăрмашать,
Ирхине те каçхине
Шăварать чечексене.

Пит илемлĕ-çке вĕсем —
Садри çепĕç чечексем!
Куçарасчĕ пир çине
Чечексен илемлĕхне!

## Ĕне ĕçĕ

*Сăнав*

Айлăмра çӳрет ĕне,
Тайлăмра çӳрет ĕне,
Тӳпемре çӳрет ĕне —
Чиперех пĕлет ĕçне:

Кăвак тĕслĕ чечекрен,
Сарă тĕслĕ чечекрен,
Хĕрлĕ тĕслĕ чечекрен
Шур сĕт тăвать вĕçĕмрен.

Шурă сĕте ырласа
Калас килет юрласа:
Шур сĕт куллен ĕçекен —
Шутсăр маттур ӳсекен.



## Икĕ уйăх

*Ыйту*

Аялалла пăхрăм та —
Уйăх выртать кӳлĕре,
Пуçа йăтса пăхрăм та —
Тепĕр уйăх тӳпере.

Ăнланмастăп, ма вара
Икĕ уйăх ман умра:
Пĕри тарăн кӳлĕре,
Тепри — тĕпсĕр тӳпере?..

Тĕлĕнтерчĕ мăй таран
Мана уйăх тамаши.
Икĕ çутă уйăхран
Хăшĕ кунта ытлашши?

**Ыйту хуравĕ: икĕ уйăхĕ те ытлашши мар: пĕри — чăн-чăн уйăх, тепри — унăн шыври сăнĕ.**

## Качакапа хĕр ача

*Юмах*

Ака вăхăчĕ иртсе кайнă ĕнтĕ. Вăй илеççĕ калчасем, çитĕнеççĕ.

Пахча хĕрринче çамрăк хĕр ача качака çитерсе çӳрет. Качаки, каскăн йышшискер, пĕрре те вырăнта тăрасшăн мар, унталла та кунталла вĕтĕнсе çӳрет — нимле те пăхса ĕлкĕрме çук. Вара çамрăк хĕр ача ним тума



пĕлмен енне качакине кăкарса хурать те алă вĕççĕн çитерме тытăнать.

— Мекекек, мĕн парас-ха ман сана?— ыйтать хĕр ача.

— Ăвăс çулçи татса пар!— тет Қачаки.

Хĕр ача ун умне ăвăс çулçи хурса парать.

— Ăвăс çулçи майлă мар, вĕрене çулçи татса пар!— тет каскăнĕ.

Хĕр ача ун умне вĕрене çулçи хурса парать.

— Вĕрене çулçи майлă мар, çăка çулçи хурса пар!— тет мекекек.

Хĕр ача ун умне çăка çулçи хурса парать.

— Çăка çулçи майлă мар, хурăн çулçи хурса пар!— тет йӳтетмĕш.

Хĕр ача ун умне хурăн çулçи хурса парать.

— Хурăн çулçи те майлă мар, урăххине хурса пар!— тет тиркевçĕ.

Хĕр ача аптрасах çитет, мĕн хурса парамши тесе йĕри-тавра пăхкаласа илет. Инçех те мар йĕплĕ курăк—тикенек курах каять. Ăна вĕсен ялĕнче кашкăр йĕппи теççĕ. Чăнах та, ун йĕпписем вăрăм та çивчĕ. Çав йĕпсем чак! кăна тăрăнсан кашкăра та хăратма пултараççĕ.

Хĕр ача качака умне тикенек хурса парать.

Қачака йĕплĕ курăка хыпса чăмлать те каялла сурса пăрахать.

— Тинех çисе тăрантăн-им?— йĕплесе ыйтать хĕр ача.

Тиркевçĕ качака нимех те чĕнмест—аванах тăрăннă пулас тикенек йĕппи ун чĕлхине. Хĕр ача çапла каласа хурать:

— Тиркекен качакана тикенек йĕппи!— тет.

## Курăну

*Вăйă*

Вăйпуç:

Çӳл тӳпери хĕвеле
Эсир мĕн пек куратăр?

Пĕри:

Эп вучах пек куратăп,
Эсĕ мĕнле куратăн?

Тепри:

Эп мечĕк пек куратăп,
Эсĕ мĕнле куратăн?

Виççĕмĕш:

Эп çăмха пек куратăп,
Эсĕ мĕнле куратăн?

Тăваттăмĕш:

Эп çăкăр пек куратăп,
Эсĕ мĕнле куратăн?

Пиллĕкмĕш:

Эп çулăм пек куратăп,
Эсĕ мĕнле куратăн?

Улттăмĕш:

Эп ункă пек куратăп,
Эсĕ мĕнле куратăн?

*(Малалла та çаплах тăсăлать.)*

## Кам-ши?

Аслă вăрман янăрать —
Ҫам-ши унта сас парать?
Чăпар куккук авăтать:
— Ҫук-кук!
Ҫук-кук!

Аслă улăх янăрать —
Ҫам-ши унта сас парать?
Унта карăш сас парать:
— Ҫарк! Ҫарк!
Ҫарк! Ҫарк!

Аслă урам янăрать —
Ҫам-ши ялта сас парать?
Шухă автан авăтать:
— Ҫи-ки-
ри-кук!

Аслă тĕнче янăрать —
Ҫам-ши ҫӳлте сас парать?
Мăн аслати авăтать:
— Ҫĕмсĕр-р! Ҫĕмсĕр-р!

## Куянккапа Упашка

*Юмах*

Аслă вăрман хĕрринче Ҫуянккапа Упашка тĕл пулаҫҫĕ. Ҫуянкка, кĕҫĕнскер, малтан пуҫ таять. Упашка, аслăскер, кайран пуҫ таять.

— Аван-и, Ҫуянкка?— тет Упашка.

— Аван-ха, Упашка! — тет Куянкка.

Қалас пеккине калана хыççан тахтав пулать весен. Каштахран Куянкка ассан сывласа ярать.

— Мĕн пулчĕ сана? — ыйтать тусĕнчен Упашка.

— Нимех те пулман.

Çапах та вăл тусĕ ыйтнипе акă мĕн каласа парать:

— Шиклĕх нумай манăн. Эпĕ — Куян, шиклĕхпе пуян. Туян, Упашка тусăм, йӳнĕ хакпах сутса ятăп.

Упашка ĕнсине хыçкаласа илет те çапла хуравлать:

— Шиклĕх тени вăл ни пыл мар, ни çу мар, ни пулă мар, ни аш мар. Шиклĕх тенĕ япала мана кирлĕ тавар мар!

— Ялта та, хулара та никам та илесшĕн мар ман тавара — аптрал!

Икĕ тус пĕр хушă чĕнмесĕр лараççĕ. Хальхинче Упашка хаш! сывласа ярать.

— Мĕн пулчĕ сана? — тусĕнчен ыйтать Куянкка.

— Нимех те пулман.

Çапах та вăл тусĕ çине тăнипе акă мĕн каласа парать:

— Ыйхă нумай манăн. Эпĕ — Упа Утаман, ыйхăпала пит пуян. Туян, Куянкка тусăм, йӳнĕ хакпах сутса ятăп.

Куянкка хăлхисене вылятса илет те çапла хуравлать:

— Ыйхă тени вăл камшăн аван пулĕ те,

маншăн майлă тавар мар, мĕншĕн тесен хам
çывăрсан та манăн куççемпе хăлхасем çывăр
маççĕ. Çавăнпа та эпĕ йĕркеллĕ çывăрмастăп
тĕлĕретĕп çех.

Кашни чĕр чунăн хăйĕн нуши пур иккен

## Кăвакал чĕпписем

*Сăнав*

Кăвакал чĕпписем ирхине
Картипе анаççĕ шыв хĕрне:
Маттурри — чи малта,
Халсăрри — хыçалта.

Кăвакал чĕпписем каçхине
Картипе утаççĕ кил енне:
Халсăрри — чи малта,
Маттурри — хыçалта.

## Лĕпĕш

Анкартисем хыçĕнче
Куртăм капăр лĕпĕше:
Капăр лĕпĕш — хĕм чечек —
Пит илемлĕн вĕлкĕшет.

Асăрханса-сыхланса
Лĕпĕш хыççăн çӳрерĕм.
Карттуспала хупласа
Кĕçех тытатăп терĕм.

Ҫапăр тумлă лĕпĕше
Ҫухатмарăм куçăмран.
Вĕл-вĕл вĕçен пĕлĕше
Тытрăм эп аран-аран.

Питĕ йывăр темелле
Чĕрĕ чуна читлĕхре:
— Вĕçех, тусăм, çӳлелле,
Савăнса юл ирĕкре!..

## Ма вĕтелет!

*Ыйту*

Май çук вĕри вĕлтĕрен,
Май çук хытă вĕтелет.
Ман ыйтса пĕлес килет:
Ма вĕтелет вĕлтĕрен?

Ыйту тупсăмĕ: вĕлтĕрен вăл пырса тĕкĕннĕрен вĕтелет.

## Пахчара

Ҫĕрсе кайрăм пахчана —
Ҫуртăм ешĕл сухана.
Ҫам сухан татса çиет —
Ҫуççульне тăкса йĕрет.

Ҫалăр-халĕ: суханне
Ҫам панă-ши йӳççине?

Ҫӗрсе кайрӑм пахчана —
Ҫуртӑм самӑр кавӑна.
Ҫавӑн выртать кунӗпе
Ҫӑкаркӑчри пӑру пек.

Ҫалӑр-халӗ: кавӑнне
Ҫам ҫӑкарнӑ ҫӗр ҫумне?

Ҫӗрсе кайрӑм пахчана —
Ҫуртӑм йӗплӗ шӑлана.
Ҫам шӑлан татма пырать —
Йӗппи ҫине тӑрӑнать.

Ҫалӑр-халӗ: шӑланне
Ҫам панӑ-ши йӗппине?

## Пукане ҫул ҫӳревӗ

*Сӑвӑ-юмах*

Пӗр илемлӗ ирхине
Ҫула тухнӑ пукане.
Утсан-утсан айлӑмпа
Тӗл пулать вӑл Арланпа.
Пукане ыйтать: — Эс кам?
Ҫаласамччӗ, каласам.
Лешӗ калать:
— Эп — Арлан,
Манпала эс ан ҫыхлан!

Пукане алне сулать —
Ухӑнса кӑна утать.

Утсан-утсан катапа
Тĕл пулать вăл Ҫалтапа.
Пукане ыйтать:— Эс кам?
Ҫаласамччĕ, каласам.
Лешĕ калать:
— Эп — Ҫалта,
Ҫалаçас кунсем малта!

Пукане алне сулать —
Малалла çулпа утать.
Утсан-утсан уйпала
Тĕл пулать вăл Хурпала.
Пукане ыйтать:— Эс кам?
Ҫаласамччĕ, каласам.
Лешĕ калать:
— Эпĕ — Хур,
Эс мана тус пек ан кур!

Пукане алне сулать —
Малалла çулпа утать.
Утсан-утсан çулпала
Тĕл пулать вăл Юспала.
Пукане ыйтать:— Эс кам?
Ҫаласамччĕ, каласам.
Лешĕ калать:
— Эпĕ — Юс,
Эсĕ пул-ха манăн тус.

Ҫавра питлĕ Пукане
Тус пулмашкăн килĕшет,
Иртсе кайнă кĕркунне
Икĕ çамрăк пĕрлешет.

Вĕсен чаплă туйĕнче
Эпĕ хам та пулнă тет,
Анчах эпĕ ун çинчен
Астумастăп нимĕн те!

## Пучах

Пĕрчĕпе тулли пучах
Пуçне пĕкет çĕрелле,
Пĕрчĕпе тулман пучах
Пуçне çĕклет çӳлелле.

## Сăрăллă кĕпер

Алăра ман тĕрлĕ сăрăсем,
Ман умра — шур хутăн листисем.
Ҫусарассăм килчĕ хут çине
Асаматăн авăк кĕперне.
Асаплантăм эпĕ нумайччен,
Вăй хурсах ĕçлерĕм ыриччен —
Пурпĕр кĕртеймерĕм хут çине
Асаматăн капăр кĕперне.
Ĕç тухмарĕ тейĕп хальхинче —
Мĕн тума пĕлес-ха тепринче?..
Пурпĕр вырнаçтарăп тепринче
Асаматăн сăрлă кĕперне.
Кунĕпе айкашăп хутсемпе,
Ҫĕрĕпе тертленĕп çилĕмпе —
Шăнăçтарăп пурпĕр хут çине
Асаматăн хӳхĕм кĕперне!



## Çĕр çырли сăмахĕ

Эпĕ питĕ кăмăллатăп
Сар хĕвелĕн ăшшине,
Çу çитсен шăтса тухатăп
Çаран-улăх таврашне.

Çумăрпа эп исленетĕп,
Хĕрелетĕп хĕвелпе,
Çынсене те илĕртетĕп
Тутлă, ырă пулнипе.

## Тархун*

Тархун килнĕ —
илмелле,
Тархун сиплĕ —
пĕлмелле.
Тархун шывне ĕçмелле —
Тарăхнине сирмелле!

* Тархун — эрĕм йышши курăк ячĕ. Унпа тутлă пылак шыв тăваççĕ. Шывне те тархун теççĕ.

## Тыркас

Тыр пуссинче хум кăна —
Тинĕс тейĕн катаран.
Тыр пусси çĕклет чуна
Тыр-пул тулăх пулнăран.

Тыр пуссинче хум кăна —
Тыркаса кунта куран.
Тыр касакан чĕр чуна
Тыркас тенĕ аваллтан.

Тыркас питĕ алхасать —
Тыр пуссинче тыр касать.
Тыр касни начар, паллах.
Тыркаспа мĕн тумалла?

## Урапа

Акă тетте урапа,
Унăн тăват кустăрма.
Чупса тухрăм урама
Урапана кустарма.

Урапаçăм, урапа,
Унăн тăват кустăрма.
Юрататăп урампа
Урапана кустарма.

## Хура кушак

*Шӳтлев*

Пирӗн хӑрӑм пек хура
Ҫушак пур:
Шӑшисем тытма вара
Пит маттур!
Вӑл пулас пулсан ула
Ҫӑшт кӑна
Шав кӑларӑттӑм тула
Эп ӑна.

Анчах пирӗн кушакки
Тӗм хура,
Ҫук та пулӗ ун пекки
Таврара.
Ҫаҫ килсессӗн катаран,
Тӗттӗм чух,
Йӗп чиксен те куҫӑмран
Курма ҫук.

Ҫавӑнпа та каҫ килсен,
Тӗттӗм чух,
Ҫушак тусӑм ҫӗтесрен
Чунӑм ҫук.
Ҫушакки те ула мар,
Хураскер.
Ҫам-ха тухӗ шырама,
Хайхискер?

## Хурăн

*Юрă*

Ешĕл тумлă йăрăс хурăн
Пирĕн кантăк умĕнче.
Нумай çул телейлĕ пурăн,
Шурă хурăн, çĕр çинче!

Ир те каç ăна куратăп,
Ҫăтра пуçлă хурăна,
Ир те каç телей сунатăп,
Ыр сунатăп эп ăна.

Йăрăс хурăн, капăр хурăн,
Эсĕ аслă çĕр çинче
Нумай çул телейлĕ пурăн
Пирĕн кантăк умĕнче!

## Чарри *

*Вил тăпри çине*
*çырса хунă сăмах*

Чиперех çӳретчĕ
Чарри — пĕчĕк чун,
Чарри чĕмсĕрленчĕ —
Чарри текех çук.

* Чарри — йытă ячĕ.



## Чĕрĕп

*Вăйă*

— Мĕскер пулнă Чĕрĕпе,
Мĕн тăвать вăл çĕрĕпе?
— Мĕн-ха пултăр Чĕрĕпе —
Йĕп шутлать вăл çĕрĕпе.
— Мĕскер пулнă Чĕрĕпе,
Ма йĕрет вăл иртенпе?
— Мĕн-ха пултăр, ир енне
Вăл çухатнă йĕппине.
— Мĕскер пулнă Чĕрĕпе,
Ма кулать вăл кунĕпе?
— Хăрăк йĕпсен купине
Хыр айĕнче курнипе!

## Шарик*

Шарик шăмă курсанах
Шутсăр хытă савăнать:
Шăмă уншăн шушкă мар,
Шушкăран та каях мар.

* Шарик — йытă ячĕ.

## Шалкăм çумăр

Çумăр çурĕ пĕр канмасăр,
Питĕ вăйлă çурĕ,
Çĕнĕ атă тăхăнмасăр
Тухаймиех турĕ.

Çумăр çурĕ чарăнмасăр,
Питĕ хытă çурĕ,
Кимĕсем çине лармасăр
Çӳреймиех турĕ.

Шалкăм çумăр иртнĕ хыççăн
Калама çук ырă.
Чупса тухрăм çара пуçăн,
Шыв юххи — ман вырăн.

Капитан пек хама куртăм,
Улăп пекех туйрăм.
Çитмĕл çичĕ тинĕс урлă
Эпĕ ишсе тухрăм.

Хама кирлĕ ĕçсем турăм,
Çитĕнӳ те турăм.
Океан та эпĕ куртăм,
Ятсăр тинĕс тупрăм.

Ман ĕçе анне курмарĕ,
Хаклама пĕлмерĕ,
Йĕпе тумшăн ӳпкелерĕ:
— Хулăпа йĕплесчĕ, — терĕ.

## Шăпкан *

Эп сăнарăм нумайччен
Ана çинчи шăпкана.
Сарă хăмăл хушшинче
Ҫанса ларать шăп кăна.

Ҫаннă майăн
вăй пухать,
Ҫаннă майăн çитĕнет,
Ҫаннă майăн пуç сăхать
Тата
çимĕç ÿстерет.

## Шăрăх

Мĕнлерех чăтас пулать —
Ҫунĕ питĕ шăрăх?
Шăпăр-шăпăр тар юхать
Ман пит-куçăм тăрăх.

Ах, тăрасчĕ сулхăна —
Сулхăн таçта тарнă!
Вĕри, шăрăх, тен, ăна
Ҫĕр тĕпне пытарнă?..

Вĕри, шăрăх пуснăран
Душ айне тăратăп —

* Шăпкан — ана курăкĕ (рыжик).

Çавăнта çеx шăрăхран
Çăлăнăç тупатăп.

Душ айĕнчи ырлăха
Хакласа калать Ķируш:
— Шăрăх пуснă халăха
Уçăлтарĕ сивĕ душ.

## Шăши юрри

Ай-ши-ши, ай-ши-ши,
Ма эп шăши пултăм-ши?
Ķурак та мана курать,
Ķушак та мана куçлать,
Хурчăка та хур тăвать.

Ай-ши-ши, ай-ши-ши,
Ма эп шăши пултăм-ши?
Çĕлен те мана çиет,
Тилĕ те мана тимлет,
Чĕрĕп те чуна илет.

Ай-ши-ши, ай-ши-ши,
Ма эп шăши пултăм-ши?
Йĕксĕк те мана йĕплет,
Пилсĕр те мана питлет,
Пурпĕрех пурнас килет.

## Шипшип

*Юмах*

Аван çав анне пурри.

Вăл кашни утăмрах асăрхаттарса, ăс парса пырать, чĕпписене инçетелле сапаланса пĕтессрен хăй патне чĕнсех тăрать.

Картишĕнче кăлăк чăххи Чăпаркка хăйĕн йышĕпе çӳрет. Унăн чĕпписем шутсăр нумай, вĕсен шутне Чăпаркка хăй те пĕлсе пĕтерейместь пулĕ.

Пĕррехинче вĕсене Чăпаркка çапла каланăччĕ:

— Инкек куçа курăнса килмест. Çавăнпа та пур енчен те сыхланас пулать. Уйрăмах пусă патне, шыв патне пырас пулсан сыхланмалла. Эсир кăвакал чĕппи мар, хур чĕппи те мар — ним мар шыва кĕрсе ӳкме пултаратăр. Шыва кĕрсе ӳкес пулсан — вилетĕр, çăлăнаймастăр! Ка-ка-калană сăмахсене асра тытăр!

Çавна Шипшип тимлесех итлерĕ. Темшĕн çавăн пек сăмахсем пуçа вырнаçасшăн мар — часах манăçа тухаççĕ.

Темиçе кунтан Шипшип катка патне пырса тухрĕ.

— Çак каткара мĕн пур-ши? — тесе ыйтрĕ вăл катка хĕрринче ларакан пуçтах Çерçирен.

— Мĕн пултăр-ха каткара? Паллах, тăрă шыв! — чĕвĕлтетсе хуравларĕ лара-тăра пĕлмен Çерçи.

Шыв тенине илтсенех тара пачĕ Шипшип. Хăранипе хăйăлтатма тытăнчĕ.

Çапах та тепӗр кун каллех катка патне пырса тухрӗ хайхискер. Хальхинче вăл ытлашши хăраса тăмарӗ. Тарма та шутламарӗ. «Шыв туллиех-ши каткара?» — тесе çех кăсăкланчӗ. Ним те тума çук — пӗлесех килет. Ха, катка çумӗнче пукан та пур. Тепӗр енче ансăр хăма та пур. Çав хăма тăрăх ним мар катка хӗррине хăпарса кайма та пулать. Хăпарса хăрах куçпа та пулин пăхас мар-ши?

Чăтаймарӗ Шипшип — хăма тăрăх йăпăр-япăр хăпарса та кайрӗ катка çине. Шыв тӗкӗрӗ çине пăхрӗ те... тӗлӗннипе икӗ пӗчӗк çунатне çат çапрӗ: катка тӗпӗнчен ун çине тепӗр чӗпӗ чăр! пăхса тăрать. Шипшип пуçне пăркаларӗ — шыври те пуçне пăркалать. Шипшип тӗкленнӗ çунаттине саркаларӗ — шыври те çунатне саркалать. Шипшип çинçе сассипе çухăрса ячӗ — шыври те ун сассипех çухăрать. Ха, ку мӗнле сӗмсӗр чӗп! Мӗншӗн вăл мана куç кӗретех мăшкăллать!?

Шипшип текех тӳссе-чăтса тăраймарӗ — куçне-луçне тискерлетрӗ те ют чӗп çине сиксе ӳкрӗ. Шăмпăрт! турӗ шыва айванскер. Шывра нимле чӗп те çук иккен. Ун куçне курăнни вăл Шипшип мӗлки кăна пулнă мӗн. Халь мӗн тумалла-ха? Мӗнле çăлăнмалла?

Юрать-ха çакна пӗчӗк хӗр ача Ялампи курса ӗлкӗрчӗ. Вăл катка патне васкаса чупса çитрӗ те чыхăнма пуçланă пӗчӗк чӗппе пукан çине тăрса шывран туртса кăларчӗ. Хӗвел ăшшинче часах чӗрӗлчӗ Шипшип.

Ялампие мухтав! Маттур Ялампи!

## Ăсанпа Тилĕ

*Юмах*

Акă вăрман.

Ăвăс туратти çинче Ăсан ларать. Çав йывăç тĕлĕпе Тилĕ иртсе пырать. Тилĕ куçĕ Ăсана тирĕнет. Çаксен хушшинче çапларах калаçу пулса иртет. Қалаçăвне Тилĕ пуçлать.

— Ăсан, ăсу пур-и сан?— тилĕртсе ыйтать.

— Ăсчах мар эпĕ, анчах та ман ăспа эс мĕн тăван?— ыйтăва ыйтупах хуравлать Ăсан.

— Ăсу пур пулсан кивçен ыйтса пăхас тетĕп.

— Çук пулсан?..

— Çук пулсан хамăнне катса парас тетĕп.

— Чăн калатăн пулсан пар эппин...

— Чăн-и, чăн мар-и, ăна малтан тĕрĕслесе пăхас пулать.

— Мĕнле майпа?

— Майне тупăпăр, малтан çĕр çине ан-ха.

— Мана кунта та лайăх, эпĕ кунтан та аванах илтетĕп.

— Э-э-э, ун пек ĕç тухмасть. Ĕç тăвас тесен пĕрле юнашар ларса канашлас пулать.

— Эпĕ юнашар ларса канашлама хирĕçех те мар, анчах та тĕклисемпе çăмлисем хушшинче туслăх çуралман вĕт-ха.

— Ы-ы-ы сана, ытла нумай пĕлетĕн!..

— Ятлаçнипе усă çук!— татса калать Ăсан.

Япшар чĕлхеллĕ Тилĕ çакна илтет те хурах çулĕпе малалла чуптарать. Тата кама улталама уйлать-ши?



## Ыйту

Кавăн, кишĕр, купăста,
Сухан, çарăк, çăмарта,
Мăян, хăях, йытпырши —
Çакăнта мĕн ытлашши?

Икĕ тĕрлĕ те хуравлама пулать:

1. Çăмарта ытлашши, вăл пахча çимĕç мар.
2. Мăян, хăях, йытпырши ытлашши, вĕсем те пахча çимĕçсем мар.

## Ыйтусемпе ытарсем

Акăш ури мĕн тĕслĕ (Хура.)

Вĕçен кайăк патши кам? (Ăмăрт кайăк.)

Вирлĕ вĕçекен мĕн ятлă (Вĕршĕн, чĕкеç.)

Выртнă ĕне хăш урисемпе малтан çĕкленет? (Малти урисемпе.)

Выртнă лаша хăш урисемпе малтан çĕкленет? (Кайри урисемпе.)

Йăмра кайăкĕ кам-ши вăл? (Курак.)

Йĕплĕ чечек мĕн ятлине пĕлетĕр-и? (Шăлан.)

Кам хăйĕн çуртне çурăмĕ çинче йăтса çÿрет? (Улитке. Халăхра ăна шуйттан мăйраки теççĕ.)

Кĕсел тырри мĕн ятлă? (Сĕлĕ.)

Масар кайăкĕ мĕн ятлă? (Çăхан. Тепĕр тĕрлĕ ăна виле кайăкĕ теççĕ.)

Мĕнле вĕçен кайăк кушакла çухăрса сĕмсĕрленсе хăратать? (Сарă кайăк. Кĕскен — сар кайăк. Вырăсла — иволга.)

Мĕнле тырă пĕрчи виç кĕтеслĕ пулать? (Хура тул пĕрчи.)

Нăрăсен миçе çунат? (Икĕ мăшăр çунат: пĕр мăшăрĕ — çемçе çунат, тепĕр мăшăрĕ — хытă çунат.)

Сенĕк хÿре мĕнле вĕçен кайăк? (Чĕкеç.)

Çăрттана тепĕр тĕрлĕ мĕн теççĕ? (Шÿпке.)

Çĕленле шăхăрса ютсене хăратакан вĕçен кайăк мĕн ятлă? (Мăйпăран.)

Çĕр айĕпе çул хывакан чĕр чун мĕн ятлă? (Каюра.)

Çуллахи вăхăт хăçан пуçланать? (Хуравсем икĕ тĕрлĕ: пĕри — сирень чечекĕ тăкăнса пĕтсен, тепри — чĕкеçсем вĕçсе килсен.)

Çул шутне палăртакан вĕçен кайăк мĕн ятлă? (Куккук.)

Çумăр умĕн вăрманти вĕçен кайăксем мĕн тăваççĕ? (Йăвисене пытанаççĕ те тухса çÿрекен шăтăкĕсене питĕрсе хураççĕ.)

Тăрна кучченеçĕ мĕн ятлă-ши? (Пăрçа.)

Ухмах курăкĕ мĕн ятлă? (Тилпĕрен.)

Хĕвел çаврăнăш пуçĕ ăçталла çаврăнать? (Хĕвеле май.)

Хӗвел урисене хӑҫан курма пулать? (Пӗлӗ
хушшипе хӗвел пӑхнӑ чухне.)

Чӑхсем хӑҫан кӑтиклеҫҫӗ? (Ҫӑмарта тӑва
умӗн е ҫӑмарта туса аннӑ хыҫҫӑн.)

Чӗп хурахӗ мӗнле вӗҫен кайӑк? (Хурчка
Чӗпсем тухсан хурчка тапӑнасран хура
тӑраҫҫӗ.)

Чӗтре йывӑҫ мӗн ятлӑ? (Ӑвӑс.)

Шуйттан мӑйраки тесе мӗнле чӗр чуна
калаҫҫӗ? (Улиткене.)

Шур кӗпеллӗ йывӑҫ мӗн ятлӑ-ши? (Хурӑн.)

Шурлӑхра пурӑнакан мӑн кайӑка мӗн теҫ
ҫӗ? (Чарлан.)

Шыв вӑкӑрӗ тени мӗнле вӗҫен кайӑк?
(Вӑкӑш.)

Шыв кашкӑрӗ е шыври кашкӑр тени мӗнле
пулӑ? (Ҫӑрттан. Унӑн тепӗр тӗрлӗ ячӗ — шӳп
ке. Ӑна шыв хурахӗ тесе те калаҫҫӗ.)

# КĔРХИ КУНСЕМ



**Авăн уйăхĕ — сентябрь**
**Юпа уйăхĕ — октябрь**
**Чӳк уйăхĕ — ноябрь**

## Ачапа шăнкăрчă

*Калаçу*

Ача:

Çунат çапса, шăхăрса
Савăнтарса юрлаттăн,
Мĕншĕн мана пăрахса
Кăнтăр енне таратăн?

Шăнкăрч:

Хĕвел хĕртсе пăхнă чух
Çурхи тумпа килтĕм эп:
Хĕллехи тум çире çук —
Шăнса кӳтĕп сивĕре.

## Ай-яй-яй

*Шӳтлев*

Анасем çинче çӳрерĕм,
Арлана курасчĕ терĕм.
Куртăм арлана —
Палламарĕ вăл мана.
Ай-яй-яй!

Катара утса çӳрерĕм,
Калтана курасчĕ терĕм.
Куртăм калтана —
Палламарĕ вăл мана.
Ай-яй-яй!

Шыв хěрне кайса çӳрерěм,
Шапана курасчě терěм.
Куртăм шапана —
Палламарě вăл мана.
Ай-яй-яй!

Ял хыçне тухса çӳрерěм,
Ялмана* курасчě терěм.
Куртăм ялмана —
Палламарě вăл мана.

## Али паттăр

*Асăну*

Аваллăхри кунсенче
Ака туман çěрсенче
Али паттăр пулнă тет,
Асапланса ӳснě тет.

Али ӳссе çитсессěн,
Арçын шутне кěрсессěн
Асап çěрне çитнě тет,
Аçтахана çěннě тет.

Али ячě тěнчипе
Аслăланса вěçнě тет.
Али ятлă паттăр пек,
Ах, пуласчě пирěн те!

* Ялман — çěр мулкачě.

## Килтĕн-им, кĕркунне?

Анне, атте тата эпĕ уçăлса çӳретпĕр. Ятарласа уçăлма тухнă.

— Килтĕн-им, кĕркунне? — терĕ анне.

Атте те çав сăмахсене каларĕ.

— Çитрĕн-им, кĕркунне? — терĕм эпĕ те.

Аттепе анне пĕр сăмахлă пулса каллех кĕрхи вăхăт çинчен калаçу пуçларĕç. Эпĕ итлесе пытăм. Май килнĕ чухне ыйтусем те паркаларăм. Эпĕ те калаçăва хутшăннине килĕштерчĕç вĕсем.

Авалхи чăвашсем кĕрхи вăхăта питĕ хаклană. Кĕр пуçтарать, хĕл салатать тенĕ вĕсем. Кĕрхи кунсенче хĕл каçмалăх апат-çимĕç, утă-улăм тата хуçалăхра кирлĕ ытти ытлăхсене янтăлама тăрăшнă.

Кĕрхи кун пурлăх-тупра енчен питĕ пуян, çавăнпа та авалхи çынсем кĕрхи уява — КĔР МĂНТĂРĔ тесе ят панă. Çав уявра пирĕн асаттесемпе асаннесем çут çанталăка çĕре çити пуç тайса тав тунă. Ун ячĕпе вăйăсем ирттернĕ, ташăсем ташланă, улахсене пухăннă, халап-юмахпа хавхаланнă, юрăсем юрланă.

Кĕр мăнтăрне — кĕрхи уява — паян кун та уявлама май пур. Манас марччĕ авалхи сăпайлă та ырă йăла-йĕркесене.

Кĕрхи вăхăт та виçĕ пайран тăрать:

Сентябрь (авăн) — кĕркунне пуçламăшĕ.

Октябрь (юпа) — кĕркунне тӳпи.

Ноябрь (чӳк) — кĕркунне вĕçлемĕшĕ.

Ачасем, кĕркунне паллисене каласа парăр-ха?



## Варвари

Пултаруллă Варвари
Пуринчен те вăр-варри,
Пуринчен те маттурри,
Пуринчен те хастарри.

## Вăкăр

*Тупкав*

Вăкăр тухнă улăха —
Курăк çисе çӳренĕ,
Астумасăр уйăха
Шыва тĕксе ӳкернĕ.

Уйăх выртать месерле —
Хытă ӳкнĕ пулмалла.
Ах, ачасем, мĕскерле
Çав уйăха çăлмалла?

Тупкав тупсăмĕ: уйăха çăлмалла мар. Шывра выртаканни вăл уйăхăн мĕлки кăна.

## Вăрман

Вăрман парать мулне,
Вăрман парать пылне.
Вăрман вăл — ырă тус!
Ăна сиен ан ту!



## Икĕ кушак

*Сăнав*

Пĕррехинче ир çинче
Ватта сулăннă кушак
Çапларах сăмах хушать:
— Йывăрланчĕ пек шăм-шак,
Ку вăл — кун улшăнасса,
Кĕçех çумăр пуласса.

Тепрехинче каç енне
Çитĕнсех çитмен кушак
Çапларах сăмах хушать:
— Çăмăлланчĕ пек шăм-шак,
Ку вăл — кун улшăнасса,
Уяр вăхăт пуласса.

## Вăхăт

Ахаль кăна пĕр кана
Ахăлтатса тăраттăм.
Çав самантра, сисмен те,
Çумри вăхăт çĕтнĕ те.

Çав çухалнă вăхăта
Эп шыратăп кунсерен,
Анчах иртнĕ вăхăта
Тупма çук мĕн çĕнĕрен.

Ку çапла вăл чăнах та,
Питĕ тĕрĕс çак сăмах —
Çавăнпа та вăхăта,
Туссем, хаклăр яланах!

## Еккĕм

*Юмах*

Еккĕм кайнă пултрана
Ешĕл тумлă вăрмана.
Куян тухнă вирхĕнсе —
Еккĕм тарнă ихĕрсе.

Еккĕм кайнă çырлана
Ешĕл тумлă вăрмана.
Тилĕ тухнă тилĕрсе —
Еккĕм тарнă çихĕрсе.

Еккĕм кайнă кăмпана
Ешĕл тумлă вăрмана.
Кашкăр тухнă кавсăлса —
Еккĕм тарнă такăнса.

Еккĕм кайнă палана
Ешĕл тумлă вăрмана.

Упа тухнӑ уласа —
Еккӗм тарнӑ ухӑнса.

Еккӗм кайнӑ хӑмлана
Ешӗл тумлӑ вӑрмана.
Ӳхӗ ларнӑ ӳхӗрсе —
Еккӗм тарнӑ ӳпӗнсе.

Еккӗм кайнӑ шӑлана
Ешӗл тумлӑ вӑрмана.
Чакак ларнӑ чаклатса —
Еккӗм тарнӑ ахлатса!

Ах-ах-ах!
Вӗҫне тухрӗ ман юмах.

## Мулкачӑ

*Шӳт*

Ҫерем ҫинче Мулкачӑ
    Сиккелет:
— Ҫиес килет кулачӑ! —
    Текелет.
Улталама Мулкачӑ
    Пит ӑста
Уншӑн пулсан кулачӑ —
    Ҫупӑста.

## Кĕрĕкпе сăхман

*Шўт*

Кĕрĕк кивĕ Сăхмана
Кĕркунне çитсен йĕплет:
— Кивĕ сăхман, кĕркунне
Мĕн тума эс кирлĕ?—тет.

Сăхман кивĕ Кĕрĕке
Çуркунне çитсен йĕплет:
— Кивĕ кĕрĕк, çуркунне
Мĕн тума эс кирлĕ?—тет.

Тумсен тавне татнă чух
Çакна пĕлни питĕ чух:
Сăхман кирлĕ йĕпе чух,
Кĕрĕк кирлĕ сивĕ чух.

## Кам ăста?

*Ыйту*

Анкартинче çитĕнет
Çавра пуçлă купăста.
Ўнăн тутлă кучанне
Кăшлама камсем ăста?

Ыйту хуравĕ: качака тата куян.

## Пайтук

*Сӑвӑ-юмах*

Ах, мӗн тӑвас, мӗн тӑвас —
Пайтук ҫинчен юмахлас.
Пайтук килет пасартан,
Парне йӑтнӑ пӗр ҫатан.

Автан валли мӗскер пур?—
Акса туман пӑрҫа пур.
Ёне валли мӗскер пур?—
Ёнер ҫулнӑ утӑ пур.

Йытӑ валли мӗскер пур?—
Йӑлӑхтарман шӑмӑ пур.
Ӑкавакалшӑн мӗскер пур?—
Ӑкавакарман кӗрпе пур.

Ӑкушак валли мӗскер пур?—
Ӑкустӑрмаллӑ шӑши пур.
Сурӑх валли мӗскер пур?—
Сухарипе улӑм пур.

Сысна валли мӗскер пур?—
Сыватакан нимӗр пур.
Хур чӗппишӗн мӗскер пур?—
Хура тулӑ кӗрпи пур.

Чӑх чӗппишӗн мӗскер пур?—
Чем-чем курӑк вӑрри пур.
Ывӑл-хӗршӗн мӗскер пур?—
Ытарма ҫук сӑрсем пур.

## Пăри пăтти

*Юмах*

Пакша майри ир çинче
Пăри пăтти пĕçерет,
Хăвăл йывăç айĕнче
Хăнисене çитерет.

Арлан çисе пăхать те:
— Ах, ытла та аван!— тет.
Асан çисе пăхать те:
— Ăс каймалла лайăх!— тет.
Куккук çисе пăхать те:
— Кун пеккине курман!— тет.
Мулкач çисе пăхать те:
— Мухтамалли çимĕç!— тет.
Пурăш çисе пăхать те:
— Пур апатран тутлă!— тет.
Чĕкеç çисе пăхать те:
— Чĕлхе çăтса ярăн!— тет.

Ырă апат хуçине
Ыр сунаççĕ ĕмĕрне!

## Путене

Путĕр-путĕр путене
Ăçта тăвать йăвине?
Йăви тырă пуссинче,
Çӳллĕ курăк хушшинче.

## Çăмха

*Юмах*

Ака пĕтес кунсенче
Çăмха тухрĕ йăвинчен,
Утма çула курчĕ те—
Вăрманалла кусрĕ те.

Куссан-куссан вăрманпа
Хирĕç пулчĕ куянпа:
— Нумай пулать курманни,
Куян тусăм, аван-и?
Куян тăчĕ чарăнса,
Сăмахларĕ васкаса:
— Эсĕ манăн тăван мар,
Хăв çулупа ярăнтар!

Çăмха кусрĕ ерипе
Утма çулăн йĕрĕпе.
Куссан-куссан вĕтлĕхпе
Хирĕç пулчĕ Тилĕпе:
— Нумай пулать курманни,
Тилĕ тусăм, аван-и?
Тилĕ тăчĕ чарăнса,
Сăмахларĕ васкаса:
— Эсĕ манăн тăван мар,
Хăв çулупах ярăнтар!

Çăмха кусрĕ ерипе
Утма çулăн йĕрĕпе.
Куссан-куссан уçлăхпа
Хирĕç пулчĕ Кашкăрпа:

— Нумай пулать курманни,
Ҫашкӑр тусӑм, аван-и?
Ҫашкӑр тӑчӗ чарӑнса,
Сӑмахларӗ васкаса:
— Эсӗ манӑн тӑван мар,
Хӑв ҫулупах ярӑнтар!

Ҫӑмха кусрӗ ерипе
Утма ҫулӑн йӗрӗпе.
Ҫуссан-куссан чӑтлӑхпа
Хирӗҫ пулчӗ Упапа:
— Нумай пулать курманни,
Упа тусӑм, аван-и?
Упа тӑчӗ чарӑнса,
Сӑмахларӗ васкаса:
— Эсӗ манӑн тӑван мар,
Хӑв ҫулупах ярӑнтар!

Ҫӑмха кусрӗ малалла
Утма тунӑ ҫулпала.
Утма ҫулӑн вӗҫӗнче
Пуҫне ватрӗ нумайччен:
— Вӑрман мана йышӑнмасть,
Ҫиле майӑн кустарас...
Ҫӑмха кусрӗ каялла
Ҫилсе тухнӑ ҫулпала.
Ҫусса-кусса пычӗ те —
Тӑван килне ҫитрӗ те!
Супса ҫӳрен ҫӑмхана —
Тухса тарнӑ каскӑна —
Ҫӗтсе илчӗҫ пит хавас.
Юмах пӗтрӗ — чарӑнас!

## Улай

*Вăйă*

— Улай, ăçта каятăн?
— Улах çĕре каятăп.
— Улай тусăм, кала хур —
Унта санăн мĕскер пур?
— Улах кăна вырăнта
Ултă вĕлле утар пур,
Утар патне тустарма
Упа пырас хыпар пур.
Упа утар ватасран
Хурал тăрас пулать ман.
Усал чунсем аснă чух
Хурал тăни питĕ чух!

## Уяркка*

*Сăнав*

— Ку кăпшанкă — Уяркка! —
Пĕлтереççĕ пĕрисем.
— Ку — уяр, кăпшанкă мар! —
Хирĕçлеççĕ теприсем.
Курăр, манăн алăра
Пĕчĕкçеççĕ кукамай.
Эп пиллерĕм уяра
Çӳлелле вĕçтернĕ май:

---

* Уяркка — хĕрлĕ çунатлă пĕчĕкçĕ кăпшанкă (сĕрлĕх), вырăсла — божья коровка. Ăна тĕрлĕ çĕрте тĕрлĕ ят парса тухнă: вĕрвитса, кире кайăк, вири-вири кукамай, уяр, уяр кайăкĕ, уяркка т. ыт. те.

Вĕç, уярăм, çӳле май
Уяр кун пулас пулсан,
Лап! çĕре ӳк, кукамай,
Йĕпе кун пулас пулсан!
Ман уярăм-кукамай
Вĕçсе кайрĕ инçене...
Ăнкарать вăл япăх мар
Çут çанталăк йăлине.

## Хурсем

Ҫакаласçĕ, акă кур,
Ҫил картинче икĕ хур:
— Ăшă кунсем иртес пек,
Сивĕ кунсем çитес пек...
Ҫил картинче яра кун
Ҫанашласçĕ икĕ чун:
— Ма сивĕпе кӳтмелле —
Ăшă енне вĕçмелле...
Ҫилсе çитрĕ кĕркунне —
Темĕн пулчĕ хурсене:
Чĕвен тăрса чупасçĕ,
Шав çӳлелле пăхасçĕ.
Икĕ пĕлĕш — икĕ хур
Вĕçме хатĕр, акă кур.
Вĕçес пек те мăн хурсем —
Вĕçме маннă халь вĕсем.
Иртсе кайĕ пĕрер çул,
Иртсе кайĕ вуншар çул,
Иртсе кайĕ пиншер çул —
Хурсем урăх вĕçес çук.



## Шуйттан мăйраки (Улитке)*

*Юмах*

Аслати авăтни илтĕнет. Çиçĕм çиçкелет. Сулмаклă çумăр пĕлĕчĕсем карти-картипе кунталла шăваççĕ. Çумăртан хăракан хурт-кăпшанкă килĕсеневаскать, пăрăмлă Шуйттан мăйраки çывăхĕнчен ирте-ирте каять.

— Эй, Мăйрака! — тет вăл иртсе пынă май. — Курмастăн-им, çумăр капланса килет. Васка килнелле!

— Мана васкани ним тума та кирлĕ мар, — тет Шуйттан мăйраки.

Нăрă тус нăрăлтатса иртет.

— Эй, Шуйттан мăйраки! — тет вăл иртсе пынă май. — Курмастăн-им, çумăр капланса килет — вăркăнтар килнелле!

Тĕкĕл тус — Тĕкĕлтура — тĕрлеттерсе иртет.

— Эй, Кукрашка! — тет вăл иртсе пынă май. — Курмастăн-им, çумăр капланса килет — тĕрлеттер килнелле!

— Мана васкани ним тума та кирлĕ мар, — тет Шуйттан мăйраки.

* Шуйттан мăйраки (улитке) — вырăсла улитка.

Шăрчăк тус вĕçсе иртет.

— Эй, Пăрмаккай! — тет вăл иртсе пынă май. — Ķурмастăн-им, çумăр капланса килет — шăвăнтар килнелле!

— Мана васкани ним тума та кирлĕ мар, — тет Шуйттан мăйраки.

·

Ачасем, калăр-ха, пăрăмлă Шуйттан мăйраки мĕншĕн пурне те «Мана васкани ним тума та кирлĕ мар» тесе хуравланă?

Мĕншĕн, пĕлетĕр-и?

Пĕлейместĕр пулсан сăвăласа хам калам:

Пăрăм-пăрăм Улитке,
Пĕчĕк кăна кĕлетке,
Пулсассăн та çул çинче —
Пурпĕр хăйĕн килĕнче.

Ķилте ларнă чух васкамалли çук теççĕ ял çыннисем ун пек чух.

## Чакан* ӳсет

Аслă улăх варринче,
Çавра кӳлĕ хĕрринче,
чакан ӳсет.
Ăшшине те сиввине,
Çумăрне те уярне
чакан тӳсет.

---

* Чакан — шыв хĕрринче ӳсекен хăмăш майлă ӳсен-тăран, тепĕр тĕрлĕ — хурапуç.

Кунĕпе те çĕрĕпе,
Çĕрĕпе те çăвĕпе
чакан ӳсет.
Палăртма çĕр илемне,
Çĕклеме ун хисепне
чакан ӳсет.
Çут çанталăк пилĕпе,
Чĕрĕ пурнăç йăлипе
чакан ӳсет.
Çынсем ырă пулнипе,
Усал куç курманнипе
чакан ӳсет.

## Чăх чĕпписем

Чăх чĕпписем кунĕпе
Шимппи-шимппи тăваççĕ,
Хăйсен çепĕç чĕлхипе
Манран çиме ыйтаççĕ.

Шимппи-шимппи чĕпсене
Хĕрхенетĕп чĕререн:
Ĕçме-çиме вĕсене
Хам паратăп ирсерен.

— Килĕр, килĕр, чĕппемсем!
— Çийĕр, çийĕр, чĕппĕмсем!
Апат çисех тăман чух
Аталанса ӳсме çук!

## Чӗм туянни

*Юмах*

Ҫурак мана чӗнтерчӗ —
Ҫурӑк яшки ҫитерчӗ.
Ҫурӑк ҫиме пӗлмесӗр
Тухса кайрӑм парнесӗр.

Пӑчӑр мана чӗнтерчӗ —
Пӑрҫа яшки ҫитерчӗ.
Пӑрҫа ҫиме пӗлмесӗр
Тухса кайрӑм парнесӗр.

Ҫӑхан мана чӗнтерчӗ —
Ҫӑмах яшки ҫитерчӗ.
Ҫӑмах ҫиме пӗлмесӗр
Тухса кайрӑм парнесӗр.

Чӗкеҫ мана чӗнтерчӗ —
Чӗлхе яшки ҫитерчӗ.
Чӗлхе яшки ҫинӗрен
Чӗм* туянтӑм чӗкеҫрен.

## Чӑмкӑш

Чӑмкӑш ятлӑ кайӑкӑн йӑли-йӗркисене самаях тӗшмӗртетӗп. Хам мӗн пӗлнине ачасене те каласа парас кӑмӑлӑм пур.

Хӑлхӑрсене тӑратӑр, ҫӑварӑрсем ҫине ҫӑрасем ҫакӑр. Пуҫӗпе пуҫлатӑп та хӳрипе вӗҫ-

* Чӗм — вӑй, пурнӑҫ, калаҫма пӗлни.

летĕп. Пĕр пуçланă сăмаха вĕçне çитермесĕр чарăнмастăп.

Чăмкăш питĕ тĕлĕнмелле вĕçен кайăк. Унăн йăви те хăйне майлă тĕлĕнтермĕш. Ăна вăл типĕ курăкпа хăмăшран купаласа тунă та... вăркăшса вĕрекен çил ачине хăваласа-ярăн-тарса çӳреме ирĕк панă. Çил ăçталла вĕрет — сулă майлă йăва та унталла ишет.

Чăмкăшăн чĕпписем те тĕлĕнмеллескерсем. Вĕсем çăмартаран тухаççĕ те тӳрех амăшĕн çурăмĕ çине хăпарса лараççĕ — катаччи чупаç-çĕ. Тепĕр тĕрлĕ каласан — яликпе* ярăнаççĕ. Хăлат е хурчăка килсе тухас пулсан та хăра-маççĕ — амăшĕ кăшкăрса ярсанах тарăн шыва чăмаççĕ. Чĕпписем хыççăн амăшĕ те шыв тĕпнелле ярăнать. Лараççĕ вара вĕсем шыв тĕпĕнче курăк тунисенчен çыртса. Лараççĕ вара çăвара шыв сыпнă пек инкек е хăрушлăх иртсе кайиччен.

Чăмкăшсене юхан шыв морякĕсем тесен те юрамалла, вĕсен пĕтĕм пурнăçĕ шывпа çыхăн-нă. Пĕтĕм пурнăçĕ шывра иртет.

Шутласа пăхатăн та, мĕнле кăна вĕçен кайăк çук-ши тĕнчере? Қашни хăйне тĕрлĕ — пĕр пек вĕçен кайăк пĕрре те çук. Ачасем те çавăн пекех, кашни хăйне майлă. Эпĕ хам та çак тарана çитсе пĕр пек ача пĕрре те курман.

Ятсем енчен илсе пăхсан та çавăн пек. Қашни ят — хăйне уйрăм ăнлав, хăйне уйрăм хăват.

---

* Ялик — пĕчĕк кимĕ, вырăсла — малая шлюпка.



## Чĕрĕп тус

Курăр-халĕ Чĕрĕпе —
Чĕрĕп йĕппи чĕрĕ пек
ытла та.
Пăхăр-халĕ Чĕрĕпе —
Вăл çӳренĕ çĕрĕпе
сунарта.
Сăнăр-халĕ ун ĕçне —
Вăл çĕнтернĕ Çĕлене
ним те мар.
Çĕнтерӳçĕ паттăра
Çак сăпайлă юрăра
палăртар.
Пирĕн юрра, Чĕрĕп тус,
Итлемешкĕн кăмăл ту,
кăмăл ту!
Пĕтĕм тĕнче тав тăвать —
Эсĕ тивĕç мухтава,
Чĕрĕп тус!

## Шăркалчă

Акă чурăс кăвакал,
Ячĕ ун — Шăркалчă,
Пусма ларчĕ те кал-кал
Чĕпĕсем кăларчĕ.

Йăваран тухсан чĕпсем
Хăвăрт аталанчĕç —
Вара ашшĕ-амăшсем
Питĕ хавасланчĕç.

Кĕр çывхарнă майпала
Уй-хирсем пушанчĕç.
Ку тата мĕн япала?
Ман туссем çухалчĕç.

Шыв кайăкĕ курăнмасть —
Те пытанса ларнă?
Çук, шăнмасăр пурăнма
Ăшă енне тарнă!

Ырă хĕвел çуркунне
Тепĕр хут вăй илĕ —
Тăван çĕрне ун чухне
Шăркалчă та килĕ!

## Ыйтусемпе ытарсем

Вăрман тухтăрĕ мĕнле вĕçен кайăк? (Ула такка.)

Йĕкел йывăçне мĕн теççĕ? (Юман.)

Қăрлик-кăрлик! тесе кĕркуннепе çуркунне камсем вĕççе ирттеççĕ? (Тăрнасем.)

Кĕр çитнине ăçтан пĕлме пулать? (Хуравĕсем тĕрлĕрен: вĕçен кайăксем ăшă енне туртăнни, çулçăсем сарăхни.)

Лашана мĕнле йыхăраççĕ? (Пах-пах-пах! теççĕ).

Мăйăр йывăçĕ мĕн ятлă? (Шĕшкĕ.)

Мĕнле йывăç çулçисем кĕркунне ытларах хĕрелеççĕ? (Ăвăс, вĕрене тата пилеш çулçисем.)

Мĕнле чĕр чун турат çине кăмпа тирсе типĕтет? (Пакша.)

Мулкачсене ăçталла чупма ансатрах: аналла е тăвалла? (Тăвалла чупма ансатрах, вĕсен кайри урисем ытла вăрăм.)

Нăрик-нăрик! тесе кам нăйкăшать? (Сысна.)

Нăркка тесе кама ачашласа чĕнеççĕ? (Сысна çурине.)

Мĕн вăл хĕрлĕ автан? (Пушар. Вутпа вылясан хĕрлĕ автан тухать теççĕ халăх хушшинче.)

Сайкка мĕнле чĕр чун? (Кролик.)

Салакайăк мĕнле кайăк-ши? (Çерçи.)

Симĕс шăрчăк мĕн ятлă? (Симĕрчен.)

Сурăхсене мĕнле йыхăраççĕ сирĕн енче? (Пирĕн енче пыти-пыти! теççĕ.)

Сыснасене мӗнле йыхӑраҫҫӗ? (Чух-чух-чух! теҫҫӗ.)

Ҫулҫӑ ҫумӑрӗ хӑҫан ҫӑвать? (Кӗркунне варринче.)

Тики-тики! тесе камсене йыхӑраҫҫӗ? (Хурсене.)

Тук-тук-тук! тесе мӗнле кайӑк сас парать? (Ула такка.)

Ути-ути-ути! тесе камсене йыхӑраҫҫӗ? (Кӑвакалсене.)

Хӑш уйӑхра шывсем пӑрланаҫҫӗ? (Ноябрь уйӑхӗнче.)

Хӗрлӗ кӗрӗк хуҫи мӗн ятлӑ чӗр чун? (Тилӗ.)

Хурлӑх хыпарҫи тесе мӗнле вӗҫен кайӑка калаҫҫӗ? (Ҫӑхана.)

Чӗриклетсе юрлакан сӗрлӗх мӗн ятлӑ? (Шӑрчӑк.)

Чӗр чунсен патши тесе кама калаҫҫӗ? (Арӑслана.)

Шӗшкӗ ҫинче мӗнле ҫимӗҫ ҫитӗнет? (Мӑйӑр.)

Эрешмен картисем хӑҫан вӗҫме пуҫлаҫҫӗ? (Кӗркунне ҫитсен.)

Юман ачине мӗн теҫҫӗ? (Икел, йӗкел.)

Янавар мӗнле чӗр чун? (Лаша. Ӑна тури чӑвашсем ут теҫҫӗ.)

## Чыслав

Йĕплĕ Чĕрĕп Упана
Қалать сапăр кăмăлпа:
— Ҫакă тутлă улмапа
Чыс тăватăп эп сана!

Пĕчĕк Упа савăнать
Сăмахпала калайми:
— Асăмра тăрса юлать
Ҫакă тутлă пан улми!

# ХЁЛЛЕХИ КУНСЕМ



**Раштав уйăхĕ — декабрь**
**Кăрлач уйăхĕ — январь**
**Нарăс уйăхĕ — февраль**

## Алтиер

*Юмах*

— Алтиер, алтăр илсе кĕр!
— Алтăр тĕлне пĕлместĕп.
— Алтăр алăк хыçĕнче.
— Алăк тĕлне пĕлместĕп.
— Алăк хăлăп леш енче.
— Хăлăп тĕлне пĕлместĕп .
— Хăлăп, ара, çилникре.
— Çилник тĕлне пĕлместĕп.
— Çилник кĕлет çумĕнче.
— Кĕлет тĕлне пĕлместĕп.
— Кĕлет аслăк çумĕнче.
— Аслăк тĕлне пĕлместĕп.
— Аслăк вите çумĕнче.
— Вите тĕлне пĕлместĕп.
— Вите пахча çумĕнче.
— Пахча тĕлне пĕлместĕп.
— Пахча кантăк хыçĕнче.
— Кантăк тĕлне пĕлместĕп.
— Кантăк куçу тĕлĕнче.
— Куçăм тĕлне пĕлместĕп.
— Куç тĕлне те пĕлмесен
Кукăль çиме ан сĕмлен!

*(Алтиер çакна илтсенех алтăр патне чупать.)*

## Арахис

*Шӳтлӗ ыйту*

Арахис вӑл — вырӑсла,
Арахис вӑл — ҫимелли.
Ах, пӗлесчӗ — чӑвашла
Арахис мӗн тумалли?

Ыйту хуравӗ: арахис чӑвашла та ҫимелли. Арахис — пӑрҫа йышне кӗрекен культура, тепӗр тӗрлӗ — ҫӗр мӑйӑрӗ.

## Арҫук

Арҫук ирех тӑрать те
Вите патне уттарать,
Лаша ҫине ларать те
Ут утланса чуптарать.

Ултӑ ҫухрӑм ҫӳресен
Урхамахне кантарать,
Урхамахӗ кансанах
Юлан утпа кустарать.

Юлан учӗ ывӑнсан
Юпах тиха йӗвенлет,
Юпах ҫине утланса
Ялтан яла вӗҫтерет.

Ӑчасем, калӑр-ха, лаша, ут, урхамах, юлан ут, юпах тенӗ сӑмахсене мӗнлерех ӑнланатӑр?

## Аштап

*Тупкав*

Авал чух, ёлёк чух,
Автан арман тытнă чух
Аш кавлесе ир çинче
Аштап ларнă килĕнче.

Акă таçтан çĕкленсе
Пĕр ыйту сиксе тухать:
Ќалăр-халĕ, ачасем,
Аштап тени мĕн пулать?

(Ыйту çине хуравлас тесен АШТАП сăмаха кутăнла вуласа пăхас пулать. Ќутăнла вуласан АШТАП — ПАТША.)

## Хăтлă пул, Хĕлле!

Анне, атте тата эпĕ яланхи пекех тулта çӳретпĕр.

— Хăтлă пул, хĕлле! — терĕ анне.

— Хĕл каçмалăх хевте пар, Хĕл Мучи! — терĕ атте.

Эпĕ вĕсем калаçнине ăнлансах пĕтерейменрĕм. Хам пĕлмен сăмахсем пирки ыйтса пĕлес терĕм. Аттепе анне пĕлмен сăмахсем çинчен тата хĕллехи вăхăт çинчен тĕплĕн каласа пачĕç.

Авалтан килекен йăла тăрăх, çынсем çут çанталăка яланах сăнаса тăраççĕ. Хĕл сивĕ



пуласран пурте шикленеççĕ, хĕллехи сивĕсене çăмăллăнрах ирттерес тесе малтанах хатĕрленеççĕ. Çав вăхăтрах чĕрĕ çут çанталăкран та пулăшу кĕтеççĕ çынсем. Çавăнпа та пурнăçа чухлакансем: «Хăтлă пул, хĕлле!»— тесе тилмĕреççĕ хĕле. «Хевте пар» тени хĕл каçмалăх тӳсĕмлĕх пама тилмĕрни пулать иккен. Çилтăманлă кунсемпе шартлама сивĕсем яланах пулмаççĕ. Хĕллехи вăхăтсенче те хĕвеллĕ те лăпкă кунсем килеççĕ. Ун пек чухне урамра выляма питех те лайăх. Ярăнас килсен сивĕ те чăрмантармасть.

Хĕллехи вăхăт та виçĕ пайран тăрать:

Декабрь (раштав)— хĕл пуçламăшĕ.

Январь (кăрлач)— хĕл варри е тӳпи.

Февраль (нарăс)— хĕл вĕçĕ.

Çут çанталăк çулталăкĕ февраль уйăхĕпе вĕçленет.

Çут çанталăк Çĕнĕ çулĕ март уйăхĕнче пуçланать. Ăна тепĕр тĕрлĕ— çут çанталăк чĕрĕлме пуçлани теççĕ.

Ачасем, хĕл паллисене пĕлетĕр-и?

## Куян тути ма катăк?

*Юмах*

Айван кайнă вăрмана
Пурак йăтса çырлана:
Куян тухнă пашкаса —
Айван тарнă хашкаса.

Çав айвана курнипе
Ķуян кулнă ик эрне.
Икĕ эрне кулнипе
Çурса янă тутине.

Çав сăлтавпа айвансем
Çӳремеççĕ çырлана,
Çав сăлтавпах куянсен
Тути катăк яланах.

## Кахал Кăвакал

Ķăвак мăйлă Ķăвакал
Пулнă питĕ те кахал:
Ишес чухне малалла
Шавах чăмнă каялла.

Шав каялла ишнĕрен
Тухса ӳкнĕ кӳлĕрен,
Çĕре тухса ӳкнĕ те —
Тилĕ пырне лекнĕ те!

Ķăвак мăйлă Ķăвакал
Текех шывра ишес çук,
Ишсен ишĕ çав кахал
Чĕпĕ пулса çитес çул.



## Кĕтеççĕ

*Ыйту*

Ак ĕнтĕ хĕл ларчĕ—
Кĕскелчĕç кунсем,
Хĕвел салхуланчĕ—
Пăрланчĕç шывсем.

Ăçта вăл çухалнă,
Хăçан вăл килет?—
Кĕтет çамрăк халăх,
Пĕр вĕçĕм кĕтет.

Кĕçех килет теççĕ,
Тен, халь çул çинче...
Кама-ши кĕтеççĕ
Раштав вĕçĕнче?

Ыйту хуравĕ: Хĕл Мучипе Юр пикене кĕтеççĕ.

## Крокодил куççулĕ

*Шӳтлев*

— Каласамччĕ, Крокодил,
Куççульне ма юхтаран?

— Курăк çиес вырăнне
Кролик çăтса янăран.

Крокодил лăпланиччен
Калаçмастăп кун çинчен.

Калаççан та кун çинчен
Кĕтме тивет ыранччен.

## Маттур

Пиллĕкре анчах пыратăп,
Кĕç ак пулăп улттăра.
Çыврма хамах выртатăп,
Ирхине хамах тăрап.

Çăвăнатăп, шăлăнатăп,
Тумланатăп эп хамах.
Тепĕр чух урай шăлатăп
Е итлетĕп çĕн юмах.

Е ракетăсем яратăп,
Çурт тума та кăмăл пур.
Пур ĕçе те пултаратăп —
Ман пулас килет маттур.



## Миçе пус?

*Вăйă*

— Автан тус, Автан тус,
Ахах куçу миçе пус?
— Ки-ки-рук, ки-ки-рук,
Ман сутмалăх тавар çук!

Автан тус, Автан тус,
Пăхăр пуçу миçе пус?
— Ки-ки-рук, ки-ки-рук,
Ман сутмалăх тавар çук!

Автан тус, Автан тус,
Кĕмĕл качу миçе пус?
— Ки-ки-рук, ки-ки-рук,
Ман сутмалăх тавар çук!

— Автан тус, Автан тус,
Мерчен алку миçе пус?

— Ҫи-ки-рук, ки-ки-рук,
Ман сутмалӑх тавар ҫук!

Автан тус, Автан тус,
Ылтӑн сассу миҫе пус?
— Ҫи-ки-рук, ки-ки-рук,
Ман сутмалӑх тавар ҫук!

*(Вылякансем ылмашӑнаҫҫӗ.)*

## Мыскара

Акӑ мӗнле мыскара:
Шур ҫитти пек ял хушши.
Ҫавӑн чухлӗ шур юра
Ҫам акса ҫӳренӗ-ши?

Хуравларӗ Ҫил ачи
Чупнӑ майӑн катаччи:
— Ҫам-ха пултӑр? Хӗл Мучи,
Вӑл вӗт ҫӗнӗ юр хуҫи.

## Пулӑш пичче

Пулӑш пичче пулӑшсан,
Хамӑр хытӑ тӑрӑшсан
Пулас пекки пулатех —
Телей ума тухатех.

## Пĕчĕк ывăлăма

*Сăпкав*

Çут çурла пек çĕнĕ уйăх
Тухрĕ тӳпене.
Пĕчĕк ывăлăм, ан çуйăх —
Хуп куçусене.

Тĕлĕрет чечеклĕ улăх,
Сад та ыйхăра.
Пĕчĕк ывăлăм, ан çуйăх —
Канлĕ çывăрах.

Пурнăçу илемлĕ, лайăх —
Ӳсĕн пуç ухса.
Пĕчĕк ывăлăм, ан çуйăх —
Çывăр вăй пухса.

Çичĕ ют, пире ан сулăх —
Хуралта салтак.
Пĕчĕк ывăлăм, ан çуйăх —
Çывăр тепĕртак.

## Çывăр, хĕрĕм

*Сăпкав*

Куйкăрăш пек хĕрĕм пур,
Куçран пăхса тилмĕрет.
Çывăр, çывăр, хĕрĕм,
Çитĕн, çитĕн, хĕрĕм!
Эс çитĕнсе çитсенех
Çĕрĕ илсе парăпăр.

Ҫуйкăрăш пек хĕрĕм пур,
Ҫуçран пăхса тилмĕрет.
Çывăр, çывăр, хĕрĕм,
Çитĕн, çитĕн, хĕрĕм!
Эс çитĕнсе çитсенех
Сулă илсе парăпăр.

Ҫуйкăрăш пек хĕрĕм пур,
Ҫуçран пăхса тилмĕрет.
Çывăр, çывăр, хĕрĕм,
Çитĕн, çитĕн, хĕрĕм!
Эс çитĕнсе çитсенех
Тухья илсе парăпăр.

## Пухчан

Пухчан хăна пуçтарать —
Пур тăванне йыхравлать.
Ахван тусăм, килех тет,
Ак çакăнта ларах тет.
Виркка тусăм, килех тет,
Вырăн патне ларах тет.
Ҫашук тусăм, килех тет,
Ҫашма çине ларах тет.
Кĕçтен тусăм, килех тет,
Кĕççе çине ларах тет.
Пуркка тусăм, килех тет,
Пукан çине ларах тет.
Çимук тусăм, килех тет,
Çемçе çĕре ларах тет.
Ялак тусăм, килех тет,
Яшка çиме ларах тет.

## Çав-çав çěрте...

*Çавра юмах*

Çав-çав енче, çав енче,
Çавра тěнче варринче,
Çава кěмен çěрсенче
Çавра кăна улăх пур,
Çав улăхра çăрха пур,
Çăрха тытма йěвен пур —
    Çав-çав енне çитесчě,
    Çав çăрхана тытасчě.

Çав-çав çěрте, çав çěрте,
Çав-çав тěлте, çав тěлте
Çавра кăна вěтлěх пур,
Çав вěтлěхре çăка пур,
Çав çăкара хăвăл пур,
Çав хăвăлта хуплу пур —
    Çав-çав çěре çитесчě,
    Çав хуплăва çиесчě!

Çав-çав çěрте, çав çěрте,
Çав-çав тěлте, çав тěлте
Çавра кăна лапам пур,
Çав лапамра кӳлě пур,
Çав кӳлěре çуйăн пур,
Çуйăн тытма вăлти пур —
    Çав-çав çěре çитесчě,
    Çав çуйăна тытасчě.

## Çĕнĕ çул умĕн

*Юмах*

Акă ĕнтĕ Кивĕ çул та кимелсе* пырать, Çĕнĕ çул та çывхарса çитет. Манăн вара Çĕнĕ çул уявне ирттерме чăрăш мар, шăпăр хулли те çук. Ай-яй-яй! Мĕнле-ха капла? «Çук,— терĕм хама хам,— кун пек юрамасть! Ăçтан та пулин, мĕнле те пулин лăсăллă пĕчĕк чăрăш тупасах пулать». Пуçа ватса шухăшлатăп. Шухăшланăçемĕн пуçăм йывăрлансах пырать. Йывăрланнăçемĕн çĕрелле усăнать. Нимле чарма çук... Чим-ха, мĕн пулчĕ мана?.. Акă алла пуртă тытатăп... Акă вăрман çулĕпе утатăп... Акă вăрмана та çитрĕм... Чăрăшне те чиперринех тупрăм...

Унччен те пулмарĕ... ман тавра тĕрлĕрен чĕр чунсем кĕпĕрленсе пухăнма тытăнчĕç. Қатăк туталлă Қуян та, хӳхĕм хӳреллĕ Тилĕ те, кăвак сăхманлă Қашкăр та, купташкаллă Пăши те, услап ураллă Упа та — пурте ман паталла çывхарса пыраççĕ. Аптранипе васкасах йывăç тураттиçине хăпарса лартăм. Ларатăп... Ларсан-ларсан çĕрелле пăхрăм та тĕлĕннипе тӳнсех анаттăм. Ман паталла тата тепĕр ушкăн тискер кайăк тапăнса килет. Йăрăм тирлĕ Тигр та, мăн çилхеллĕ Арăслан та, мăйрака сăмсаллă усал Носорог та пур, çăмламас Упăте те — такам та пур кунта. Пурте ман еннелле ăнтăлаççĕ, пурте мана çуркаласа

---

* Қимелсе пырать — вĕçленсе пырать.

тăкма хĕвĕнеççĕ. Манăн вара нимле хӳтлĕх те çук. Қăшкăрас тетĕп — кăшкăрма та халăм çук, çухăрас тетĕп — çухăрма та хăватăм çук. Ҫӳç-пуç вирелле тăрса кайрĕ! Хăранипе хăйăлтăк сассăм та пĕтсе ларчĕ!.. Ах, хăрушă!.. Ах, хăрушă!..

Манăн çак инкекрен хăтăлас тесен мĕн тумалла-ши?

Тупсăмĕ: ыйхăран вăранмалла.

## Ҫил ачи

Авал тенĕ кунсенче
Ҫак таврари çĕрсенче
Тĕнче касан Ҫил ачи
Чупнă иккен катаччи*.

Халь ăçта-ши Ҫил ачи?
Халь те чупать катаччи:
Халь те çилли кăра чух
Вăл ахăрать чăтма çук.

---

* Қатаччи — катаччи чупни, çăварни вăхăтĕнче лаша кӳлсе, çамрăксене лартса, юрăсем юрласа ял хушшинче ярăнни.

## Çĕнĕ çул

Иртсе кайрĕ Кивĕ çул —
Пирĕн умра парăм çук,
Килсе çиттĕр Çĕнĕ çул —
Пире сунтăр ăнăçу!

## Тунката

*Юмах*

Пĕррехинче ир çинче
Утса пыран çул çинче
Ешĕл симĕс вăрманта
Куртăм эпĕ Тунката.

Çĕре çити пуç тайса
Юмахларăм пуçласа:
— Каласамччĕ, Тунката,
Мĕн туса ларан кунта?

Çĕрĕк ăшлă Тунката
Хуравларĕ хăвăртах:
— Пĕр канмасăр вăрманта
Эп тăратăп хуралта!

Халăх çинче хавха пур,
Çав хавхара чăнни пур:
Халь те пулин вăрманта
Хурал тăрать Тунката.



## Хӗл Мучи кучченеҫӗ

Хӗл Мучи кучченеҫне
Валеҫрӗмӗр туссене:
Арӑслана — арахис,
Ҫарсаксене — карамель,
Ҫуянсене — купӑста,
Ҫашкӑрсене — катӑркас,
Тилӗсене — тилпӗрен,
Ыттисене пурне те
Ылтӑн хутлӑ пӗремӗк.

## Уйӑхсем

Авалхи чӑваш календарӗнче 13 уйӑх пулнӑ. Хальхи вӑхӑтра пирӗн календарьте 12 уйӑх.

Ҫут ҫанталӑк календарӗ — март (пуш) уйӑхӗпе, ҫут ҫанталӑк ҫӗнелсе чӗрӗлнипе пуҫланать.

Халăх календарĕ — январь (кăрлач) уйăхĕпе пуçланать.

Чăвашла-вырăсла уйăх ячĕсем:

Кăрлач уйăхĕ — январь
Нарăс уйăхĕ — февраль
Пуш уйăхĕ — март
Ака уйăхĕ — апрель
Çу уйăхĕ — май
Çĕртме уйăхĕ — июнь
Утă уйăхĕ — июль
Çурла уйăхĕ — август
Авăн уйăхĕ — сентябрь
Юпа уйăхĕ — октябрь
Чӳк уйăхĕ — ноябрь
Раштав уйăхĕ — декабрь

Мĕн пурĕ — 12 уйăх.

Кашни уйăхра — 4 эрне тата пĕр, икĕ е виçĕ кун, кашни эрнере — 7 кун е талăк, кашни талăкра — 24 сехет, кашни сехетре — 60 минут, кашни минутра — 60 секунд.

## Хапăл

Элли хапăл,
Элли хапăл
Туссенчен парне пухма.
Эпĕ хапăл,
Эпĕ хапăл
Туссене парне пама.

Туссем, килĕр,
Туссем, килĕр,
Туссем, килĕр савăнма!
Парне илĕр,
Парне илĕр —
Парне пирĕн сахал мар!

## Упашка

Аякри вăрманта
Упашка пурăнать.
Çав чĕр чун ытла та
Услапрах курăнать.

Вăрманти çав услап
Кĕркунне мĕн тăвать?—
Вăрмана ухтарса
Çимелли шав шырать.

Çав услап Упашка
Хĕл çитсен мĕн тăвать?—
Чи улах шăтăка
Юр çусан пытанать.

Вăл унта мĕн ĕçлет?
Мĕн хыпать çăвара?—
Вăл унта тĕлĕрет,
Хĕл каçа çывăрать.
Паю-пай!

## Упа кунĕ

Ак тата, Упа кунĕ те пур-и? Ма пулмалла мар-ха Упа кунĕ?!

Çут çанталăкра кашни чĕрĕ чун валли вырăн пур, çут çанталăкăн кашни чĕрĕ чун валли кунĕсем те пур. Вĕсене курма, куçпа курнине ăнланма кăна пĕлес пулать.

Упасем раштав (декабрь) уйăхĕн 4-мĕш тĕлнелле майлă вырăн шыраса тупаççĕ те хĕл каçмаллах кĕрсе выртаççĕ. Кĕрсе выртаççĕ те хĕл каçипе çывăраççĕ, çур хĕл çитсен тин хăрах аяк çинчен тепĕр аяк çине çаврăнса выртаççĕ. Шăп кăна Упа шăтăка кĕрсе выртас куна Упа кунĕ теççĕ те. Ку вăл упасен хĕллехи каникулĕ.

Упа кунĕ иртсен шартлама сивĕсем пуçланаççĕ. Чăн малтан раштав сивви пит-куçран чĕпĕтме тытăнать.

Асăрханнă пулăр шартлама сивĕсенчен!

## Услап упа

Услап упа кĕркунне
Кĕрсе выртать йăвине.

Çывăрать вăл йăвинче
Çурхи ăшă çитиччен.

Услап упа йăлине
Ан илсем эс хăв çине.

## Циркра

Услап упа-утаман
Ролик çинче яранать.
Ролик çинче ярăнма
Ķам вĕрентнĕ-ши ăна?

Упа туса вĕрентме
Ăслă этем пынă пуль.
Ăсли мĕскер хушнине
Упа туса пынă пуль.

## Юр пике

*Шӳтлев*

Сар хĕвел кулса пăхать,
Юр пике куçне шăлать,
Хура куçĕ шывланать,
Юр çине тумла тумлать.
Юр пике, пĕлтер мана:
Ķам çапла йĕртет сана?
Юр пике ăшша сивлет,
Ăшăпа часах чирлет.
Юр пике, сана мĕн тес?
Мĕн парас, мĕнпе сиплес?
Мĕн тăвас-ха, мĕн тăвас,
Мĕнлерех ман пулăшас?
Вертолет чĕнсе илес —
Çурçĕр полюсне леçес!
Çу каçа вăл чĕрĕлет —
Тепĕр çул каллех килет!



## Юр

Çамрăк халăх, ир çинче
Ÿркенмесĕр тухса кур:
Çут çанталăк уççинче
Пур çĕрте те шурă юр.
Юр-юр-юр,
Юр-юр-юр...
Çамрăк халăх, ир çинче
Ÿркенмесĕр тухса кур:
Тин çех çунă юр çинче
Эпĕ хывнă йĕр те пур.
Пур-пур-пур,
Пур-пур-пур...

## Юр ача

*Юмах*

Ануш ирпе ирех сасартăк вăранса каять.

Ăна ăшă ыйхăран вăхăт çитичченех кам е мĕн вăратма пултарчĕ-ха?

Вăл çывăракан пÿлĕме шупка çутă сăрхăнса кĕрет иккен. Çав шупка çутă пÿлĕме тулнине туйнăран вăранса кайрĕ те Ануш. Вырăн çинчен йăпăр-япăр сиксе тăчĕ те чÿречерен кармашса пăхрĕ. Тул çутăлса çитмен иккен-ха, анчах çĕр каçипе çунă юр çутипе пĕтĕм çут çанталăк çуталса кайнă. Çĕнĕ юр çути чÿречерен пÿлĕме кĕрсе Ануша вăратнă та. Çĕнĕрен выртас темерĕ Ануш. «Вăраннă пулсан — вăраннă пултăр», — терĕ те вăл кулленхи ĕçне пуçăнчĕ: питне-куçне çуса тасатрĕ, тумланма тытăнчĕ.

Амăшĕ те вăраннă иккен: ирхи апат хатĕрлет. Ануш амăшне ирхи салам каларĕ те урама тухса кĕме ирĕк ыйтрĕ. Амăшĕ хирĕçлемерĕ. Ануш пĕчĕк кĕреçине тытса урама чупса тухрĕ. Ах, мĕн тери лайăх çĕнĕ юрпа выляма! Выля та выля, кансĕрлекен, чăрмантаракан та çук!

Кĕреçе кирлех те пулмарĕ. Кĕçех вăл çĕнĕ юр чăмаккине кустарса çавра çăмха турĕ. Çĕнĕ юр çăмхи! Çав çăмха, çавракана пулнă-ран-ши, ача пуçĕ пек курăнать. Те курăнать, те туйăнать — кам пĕлет çав. Ануш пикенсех юр çаврашкипе айкашма тытăнчĕ. Айкашнă май асамлă сăмахсем те калать. Кĕсйинчен икĕ мăйăр туртса кăларчĕ — икĕ хăмăр куç пулчĕ те! Картишне кĕрсе хуçăк шăллă турапа шăннă кишĕр тупса тухрĕ: хуçăк шăллă тура çăвар, шăннă кишĕр хĕрлĕ сăмса пулчĕ. Акă çара пуçа хуплама çăмăл калпак та тупăнчĕ. Мĕн кирлĕ тата? Чим-ха, чим? Ачан ячĕ çук вĕт! Ятсăр ача япăх ӳсет теççĕ.

— Мĕнле ят тупса хурам-ши? — терĕ Ануш.

— Нимле ят та кирлĕ мар, манăн ятăм — Юр ача! Юр ача!

Ануш ним калама пĕлеймерĕ, куçĕсем чарăлса кайрĕç. Ха!.. Ха!.. Юртан тунă пепке чăвашла сăмахлать! Кур-ха ăна!

Ануш мĕн те пулин калама ĕлкĕриччен юртан тунă ача малалла сăмахлама тытăнчĕ:

— Тавах сана, Ануш, мана туса кун çути кăтартнăшăн!

Пуç тайса тав турĕ те Юр ача татах калаç-ма пуçларĕ:

— Халь каятăп ĕнтĕ эпĕ!

— Ăçта каятăн? — тинех сăмах хушма пултарчĕ Ануш.

— Ăçта пултăр, Хĕл Мучипе Юр пике пурăннă çĕре.

— Мĕн тума?

— Мĕнле мĕн тума пултăр?! Хĕл Мучипе Юр пикене Çĕнĕ çул йыхравĕ леçме каятăп. Вĕсем, пĕлетĕн-и, йыхрав илмесĕр вырăнтан та хускалмаççĕ, çула та тухмаççĕ.

— Ун пекех пулсан Хĕл Мучипе Юр пикене пиртен те салам кала: часрах хăнана килччĕр!

— Ку ĕнтĕ вăл йăлтах сиртен хăвăртан килет: мĕн чухлĕ лайăхрах хатĕрленетĕр Çĕнĕ çул уявне, хăнисем те çавăн чухлĕ васкарах килĕç. Тепре куриччен, Ануш!

Юр ача çапла houларĕ те хăвăрттăн утса кайрĕ. Çурçĕрелле утать.

Ануш ун хыççăн алă сулса юлчĕ.

Ял çыннисем вара çак асамлăха курайманĕç те!

## Ялсем

*Шутлав*

Ака пĕтнĕ кунсенче,
Вырма тухас тĕлсенче
Илсе кайрăм аташа*
Хампа пĕрле Апаша,

---

* Аташ — пĕр ятлă çын, вырăсла — тезка.

Апашран — Йăлкăша,
Йăлкăшран — Нăрваша,
Нăрвашран — Пакăша,
Пакăшран — Таваша,
Тавăшран — Урпаша,
Урпашран — Ямаша.
Ямаш ятне каласан
Ят шутлавĕ пĕтрĕ ман.

Шутлав ĕçĕ çĕнĕрен пуçланать.

## Ятмар

*Вăйă*

Акă çитрĕ Ануш —
Аллинче ун калуш,
Акă çитрĕ Иван —
Аллинче ун палан,
Акă çитрĕ Назар —
Аллинче ун кусар,
Акă çитрĕ Ульха —
Аллинче ун çăмха,
Акă çитрĕ Хумма —
Аллинче ун улма,
Акă çитрĕ Юман —
Аллинче ун юсман,
Акă çитрĕ Ятмар —
Ятмар, эс тухса тар!

Ятмар вăйă картинчен тухать. Вăйă малалла тăсăлать.

# Ялтан тарнă Автан

*Шӳтлĕ юмах*

Пурччĕ пирĕн ялта
Савăк саслă Автан,
Вăранатчĕ ялан
Пуринчен те малтан.

Пĕринче кăшт кăна
Сăмах тиврĕ ăна.
Сив сăмах илтнĕрен
Тĕксĕмленчĕ тĕсрен.

Тĕксĕмленчĕ тĕсрен,
Урăхланчĕ сасран,
Сив сăмах илтнĕрен
Япăхланчĕ сăнран.

Çавăн хыççăн Автан
Тухса кайрĕ ялтан,
Тепĕр хут каялла
Таврăнмарĕ яла.

Ах, Автан, сар Автан,
Ма эс тартăн ялтан?
Эрленетпĕр ялан
Эс ялта çуккăран.

Савăк саслă Автан,
Таврăнсамччĕ ютран,
Ҫаялла таврăнсан
Ятламастпăр нихçан!

## Ыйтусемпе ытарсем

Вĕçен кайăксем хĕллехи сивĕре мĕншĕн ял çывăхне иленеççĕ? (Апат çуккипе.)

Йывăç миçе çул пурăннине мĕнле майпа пĕлеççĕ? (Çĕнĕ тунката çинчи çавра йĕрсене шутласа пĕлеççĕ.)

Қамăн пуçĕ çинче вăрман ӳсет? (Пăлан пуçĕ çинче. Унăн мăйраки йывăç пек.)

Қам хăйĕн пуçĕ çинче суха пуç купташки йăтса çӳрет? (Пăши. Унăн мăйраки суха пуç купташки пек курăнать.)

Қушак кайăкĕ мĕнле чĕр чун? (Шăши.)

Мĕнле вĕçен кайăк хĕл варринче чĕп кăларса ӳстерет? (Қукăр сăмса е хыркук.)

Мĕнле чĕр чунсем хĕл каçипех çывăраççĕ? (Пурăш, упа, чĕрĕп.)

Мĕн ятлă-ши шур сухаллă Хĕл хуçи? (Хĕл Мучи.)

Нях-нях-нях! тесе кама йыхăраççĕ? (Анчăкпа йытта.)

Пиçукка тесе мĕнле чĕр чуна калаççĕ? (Қушака.)

Раксем ăçта хĕл каçаççĕ? (Қӳлĕ, пĕве, çырма хĕрринче шăтăксенче.)

Тĕвик-тĕвик! тесе мĕнле вĕçен кайăк сас парать? (Тăмана.)

Тукмак хӳре тесе кама ылханаççĕ? (Қашкăра.)

Уйăп ятлă вĕçен кайăк ăçтан вĕçсе килет? (Çурçĕр енчен. Ăшăтсан вăл каялла вĕçсе каять.)

Халăх сăвви-юррисенче упана мĕн тесе чĕнеççĕ? (Утаман теççĕ.)

Хĕле кĕрес умĕн кам шур кĕрĕк тăхăнать? (Куян, мулкач.)

Хĕллехи çырла мĕн ятлă? (Кĕтмел.)

Хĕл Мучи мăнукне мĕнле чĕнеççĕ? (Юр пике.)

Хыр йĕкелне мĕнле вĕçен кайăк шĕкĕлчет? (Кукăр сăмса, тепĕр тĕрлĕ — хыркук.)

Хыркук хăçан чĕп кăларса ӳстерет? (Хĕл варринче.)

Чăх-чĕпсене мĕнле йыхăраççĕ? (Чип-чип-чип!)

Шартлама сивĕре упа мĕн тăвать? (Çывăрать.)

Юмахсенче кашкăра мĕн тесе чĕнеççĕ? (Кашаман теççĕ.)

Юр çунă вăхăтра пурăш мĕн тăвать? (Шăтăкĕнче çывăрать.)

Яхта тесе мĕнле йывăça калаççĕ? (Хыр йывăçне.)

Яшкана яракан вĕтĕ чул мĕн ятлă? (Тăвар.)

Савăк вăхăт кĕнеки
Çак сăвăпа вĕçленет.
Пулĕ татах ун пекки:
Ыдарай çырать, ĕçлет.

*Автор*



# ТУПМАЛЛИ


Ачалăх кунĕсем . . . . . 3

Çурхи кунсем . . . . . 23

Çуллахи кунсем . . . . . 61

Кĕрхи кунсем . . . . . 95

Хĕллехи кунсем . . . . . 121

*Для дошкольного возраста*

**Николай Васильевич Васильев**
**(ЫДАРАЙ)**

# САВӐК ВӐХӐТ
# БЕЗЗАБОТНЫЕ ГОДЫ

**Рассказы, стихи, сказки, загадки**

На чувашском языке

Редактор **В. П. Тимаков**
Художник **В. А. Кузьмина**
Художественный редактор **Г. С. Самсонова**
Технические редакторы **В. П. Окина,**
**Л. К. Егорова**
Корректор **Н. П. Печникова**

ИБ 2753

Сдано в набор 24.03.93 г. Подписано к печати 19.10.93 г. Формат 60×84 1/16. Бумага офсетная. Гарнитура литературная. Печать офсетная. Усл. п. л. 8,84. Усл. кр.-отт. 36,06. Учетно-изд. л. 5,0. Тираж 12000 экз. Заказ № 797. Изд. № 50. Цена «С» 78.

Чувашское книжное издательство,
428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4.
Типография № 1 Государственного комитета Чувашской Республики по печати и информации.
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.

250-



ЧĂВАШ КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ